ПЕТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПӖРЛЕШӖР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

1953 ҫул Июль 14 ЫТЛАРИКУН № 136 (9045)

35-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тавра тачӑрах пӗтӗҫер! (1 стр.).
ВЦСПС Президиумӗнче (1 стр.).
Выльӑх апачӗ ытларах хатӗрлер! (1 стр.).
Шупашкар хулинчи тата республикӑри коммунистсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗн постановленийӗ пӗр шухӑш-кӑмӑлпа ырлаҫҫӗ (2 стр.).
СССР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствинче (2 стр.).
П. Щипцов.—Тырӑ пуссинче (2 стр.).
С. Тихонов.—Сӑнав участокӗнче (2 стр.).
А. Кучков.—Ферма хӗрӗсем (3 стр.).
Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗнче (3 стр.).
ХАҪАТСЕМ ҪИНЧЕН ВУЛАКАНСЕМ МӖН КАЛАҪҪӖ: В. Антонов.—Хаҫатӑн идейӑллӑ шайне ӳстермелле (3 стр.).
А. Федоров.—Ҫамрӑк специалистсен ҫӗнӗ отрячӗ (3 стр.).
А. Александров.—Тӗнчери лару-тӑру (4 стр.).
Корейӑри ӗҫсем (4 стр.).
Демократиллӗ Германи Республикин премьер-министрӗ сумӗнчи пичет ведомстви пӗлтерни (4 стр.).
Миршӗн, Америка пуҫ пулса тӑнине хирӗҫ. Лондонри ӗҫҫыннисен демонстрацийӗпе митингӗ (4 стр.).

СССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑхӗ—нумай нациллӗ социализмла государство никӗсӗсен никӗсӗ

Пирӗн Тӑван ҫӗршыв—Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗ—ирӗклӗ те пӗр тан правӑллӑ халӑхсен никӗм аркатайми тӑванла туслӑхӗ тӗслӗхе, вӗсен коммунизм строительствинче пӗр-пӗрине творчествӑллӑ тулеашса пурӑнни тата пӗр-пӗрне пулӑшса пынин тӗслӗхне пӗтӗм тӗнче умӗнче кӑтартса парать.

СССР Союзӗнчи социализмӑн пите пуян опычӗ тата пирӗн ҫӗршыв 35 ҫул хушшинче утса тухнӑ ҫул—кӗрешӳпе ҫӗнтерӳсен ҫулӗ ҫакна кӑтартса парать: Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе туса хунӑ советлӑ государство строийӗ нумай нациллӗ государствӑн чи паха тӗслӗхӗ пулса тӑрать.

СССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑхӗ—нумай нациллӗ социализмла государство никӗсӗсен никӗсӗ тата тӗванла советлӑ республикӑсен мӗнпур ҫитӗнӗвӗсен тӗп условийӗ.

Пирӗн ҫӗршыври халӑхсен историллӗ ҫӗнтерӗвӗсен хавхалантараканӗпе организаторӗ Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ пулса тӑрать. Ленинла-сталинла наци политикине пӗр пӑрӑлланмасӑр тата ҫине тӑрса пурнӑҫласа пынипе пирӗн парти историре чи малтанхи хут, нумай нациллӗ питех те пысӑк государствӑра, нацисем хушшинче ӗмӗр-ӗмӗр пынӑ хирӗҫӗве пӗтерчӗ. Коммунистсен партийӗ ӗлӗк пусмӑрта пулнӑ халӑхсем экономикӑпа культура тӗлӗшӗнчен кая юлнине пӗтерчӗ, Совет Союзӗнчи пур нацисене те пӗр тӑванла ҫемьене пӗтӗҫтерчӗ. Пирӗн ҫӗршыври общество пурнӑҫӗнче—хуҫалӑх, государство строй тата культура тӗлӗшӗнчи пур ӗҫсене те халӑхсен пӗрлехлӗхе пулса тӑчӗ, вӗсен пӗр-пӗрне шанса тӑрасси тата ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвас ӗҫре пӗр-пӗрне пур енӗпе те пулӑшса пырасси. Ленинла-сталинла наци политикине, социализм ҫӗнтерӗвӗшӗн вунпар ҫулсем хушши пынӑ кӗрешӳре тӗрӗсленнӗ политикӑна, Совет Союзӗнчи пур халӑхсене те пӗр кӑмӑллӑн ырлаҫҫӗ тата ӑна пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ.

Совет стройӗ—тӗнчери чи демократиллӗ строй—мӗнпур нацисен ӗҫҫыннийӗсен ҫӗршыва ертсе пырас ӗҫе активлӑн хутшӑнтарма май парать. Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви историллӗ ӗҫсем тума пирӗн ҫӗршыври мӗнпур нацисен ӗҫҫыннийӗсен анлӑ массисен творчествине ҫӗклерӗҫ, ирӗклӗ халӑхсен хӑватлӑ вӑйӗсене хавхалантарса пычӗҫ.

Пирӗн ҫӗршыв ҫӗн-ҫӗнӗ палламалла мар улшӑнчӗ. Питех те анлӑ ҫӗр ҫинче, ӗлӗк патриархаллӑ йӗркесем пуҫ пулса тӑнӑ ҫӗр ҫинче, халӗ аслӑ та хавасла ӗҫсем пулса пыраҫҫӗ. Ӗлӗк экономика тӗлӗшпе юлса пынӑ районсенче Совет влаҫӗ ҫулӗсенче ҫӗршер ҫӗнӗ хуласем, пиншер те пиншер заводсем, фабрикӑсем электростанцисем, колхозсем, МТС-сем тата совхозсем тунӑ.

Ӗлӗк, патша вӑхӑтӗнче, пусмӑрта пурӑннӑ халӑхсен экономика тӗлӗшӗнчен кая юлнине тата пӗр тан мар пулнине чӑннипех пӗтерни Коммунистсен партийӗн наци политики тунӑ чаплӑ ҫӗнтерӳ пулать. Ҫакна мӗнпур союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсенче хӑватлӑ индустри туса хуни тата колхозла совхоз производствин чаплӑ ҫитӗнӗвӗсем кӑтартса парасҫӗ. Ҫакна палӑртмалла: пӗтӗм СССР Союзӗпе илсе таналаштарсан, нацилле республикӑсенче пуҫтра промышленносӗ чылай хӑвӑрт аталанса пырать. Ҫӗршывра шкулсем, аслӑ вӗренӳ заведенийӗсем, наука учрежденийӗсем, культура ҫурчӗсем, клубсем тата театрсем пӗтӗм ҫӗрте нумай туса лартнӑ. СССР Союзӗнчи мӗнпур халӑхсен чӗлхисемпе кӗнекесем, хаҫатсемпе журналсем пичетленсе тухаҫҫӗ. СССР Союзӗнчи пур халӑхсен те содержанийӗ социализмла, формипе нациллӗ культури чечекленсе аталанать.

Ҫакна ӑна йӑлтах Коммунистсен партийӗн планӗсене пурнӑҫланипе тата вӑл ертсе пынипе тунӑ. Ӗҫҫыннисен ырлӑхӗшӗн тата пирӗн ҫӗршыв пур халӑхӗсене те чечеклентерессишӗн тӑрӑшасси Коммунистсен партийӗн чи аслӑ закон пулса тӑрать. Ҫак мӗнпур ҫитӗнӳсене ӗҫлеме юратакан, талантлӑ та паттӑр совет халӑхӗн аллипе, хӑйӗн речӗсене социализмла нацисене вунпарӑн пӗтӗҫтерсе тӑракан халӑх аллипе тунӑ.

Партин XIX-мӗш съездӗн историллӗ решенийӗсенче Коммунистсен партийӗн наци политикине пӗр пӑрӑлланмасӑр пурнӑҫласа пымалли задачӑсене ҫӗнӗ вайпа палӑртса хунӑ. Хамӑр ҫӗршыври халӑхсене туслӑ пурӑннӑ чухне пирӗншӗн шалтра тулӑрри нимӗнле тӑшмансем те хӑрушӑ мар. Пилӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе йышӑннӑ директивӑсенче союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсенче пурнӑҫ те хуҫалӑхпа культура строительствине анлӑн туса пыма палӑртнӑ. Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе коммунизм строительствин питӗ пысӑк задачисем анлӑн пурнӑҫа кӗрсе пыраҫҫӗ.

Пирӗн ҫӗршыври халӑхсем пӗрлӗхлӗ тата Коммунистсен партийӗпе унӑн Центральнӑй Комитечӗ тавра, Совет правительстви тавра тачӑ пӗтӗҫсе тӑраҫҫӗ, вӗсем мӗнпур парти тӗрӗслӗ политикӑна хӗрӳллӗн ырласа, ӑна активлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Партин, правительствӑн тата совет халӑхӗн никӗм аркатайми пӗрлӗхне кӑтартса паракан тӗслӗхсенчен пӗри Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗн йышӑнӑва постановлени тата СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ йышӑннӑ постановлени парти комитечӗсен партийӗпе пӗрле ирттерекен пленумӗсенче, ҫавӑн пекех ӗҫҫыннисен массӑллӑ пухӑвӗсенче пӗр кӑмӑллӑ пулса ырланӑ пулать.

Партипе халӑхӑн чи ылханлӑ тӑшманӗ, пӗтӗм тӗнчери империализмӑн тарҫи Берия партие тата государствӑна хирӗҫле тунӑ ӗҫӗсене, Совет государствине хавшатса ют ҫӗршыв капиталне усӑ тӑвас тесе туса пынӑ ӗҫӗсене миллионшар та миллионшар совет ҫыннисем, пирӗн Тӑван ҫӗршыври мӗнпур халӑхсем ҫав тери тарӑхса питлерӗҫ. Берияна тата государствӑна хирӗҫле преступникла ӗҫӗсене пӗтерсе лартас тӗлӗшпе партин Центральнӑй Комитечӗн Президиумӗ йышӑннӑ вӑхӑтлӑ та татӑклӑ мерӑсене тата Берияна преступникла ӗҫӗсем ҫинчен пӑхса тухма СССР Верховнӑй Судне паччӑм ҫинчен СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ йышӑннӑ постановление совет ҫыннисем пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса ырлаҫҫӗ.

Ӗҫҫыннисен пухӑвӗсенче пирӗн ҫӗршыври мӗнпур нацисен представителӗсем, КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ ҫинчен калакан информацие пӗлтерӗвӗ тата СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн постановленине ӳстерес явса, сыхлӑхӑ пур майсемпе те ӳстерес пыма, хӑйсен речӗсене Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тавра тачӑрах пӗтӗҫтерме, хӑйсен пӗтӗм вӑйӗсене Совет государствине малалла тӗреклетес тата коммунизм строительствин задачисене пурнӑҫлас ӗҫе мобилизацилеме калаҫҫӗ.

Тӑван ҫӗршыва сутакан, партипе халӑх тӑшманӗ, буржуалла перерожденец Берия тӗрлӗ уттарлӑ та чее меслетсемпе СССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑхне хавшатма, нумай нациллӗ социализмла государство никӗсӗсен никӗсне хавшатма хӑтланнӑ. Пӗтӗм тӗнчери империализмӑн ҫак агенчӗ, партин наци политикине пӑснисене хирӗҫ кӗрешнӗ пек пулса, СССР Союзӗнчи халӑхсене хирӗҫтерсе яма, союзлӑ республикӑсенче буржуалла элементсене вӑйлатма хӑтланнӑ.

Капитализм йӗркисене каялла тавӑрма хӑтланнӑ, халӑхсене тискер империалистла эксплуататорсен влаҫне кӗртсе ӳкерме хӑтланнӑ ҫак вылӑмла провокаторпа авантюристӑн ирсӗр шухӑшӗсем ҫинчен совет ҫыннисем ҫав тери тарӑхса калаҫҫӗ.

Ӗҫҫыннисен пухӑвӗсенче туха калаҫнисем пурте Советлӑ Тӑван ҫӗршыва хӗрӳллӗн юратнине, тӑшмансене ҫав тери ылханнине палӑртаҫҫӗ.

Ӗҫҫыннисен нумай йышлӑ пухӑвӗсенче вырӑссемпе украинецсем, белоруссемпе грузинсем, казахсемпе латышсем, узбексемпе азербайджанецсем, пирӗн ҫӗршыври мӗнпур нацисен пӗр ҫемйинче пурӑнакан халӑхсем вырӑссемпе пӗрле тӑванла ҫемьере тӑваннӑн вӗрме ҫемьере пурӑнни—социализмла Тӑван ҫӗршыва юратнин пархатарлӑ идейисемпе пӗрлешнӗ, тӑванла Коммунистсен партийӗ тавра тачӑ пӗтӗҫнӗ пӗр нацисен—представителӗсем ҫавӑн пек калаҫҫӗ.

Пирӗн партин чи таса тивӗҫӗ—СССР Союзӗнчи халӑхсен никӗм аркатайми туслӑхне малалла ҫирӗплетесси, нумай нациллӗ социализмла государствӑна тӗреклетесси, совет ҫыннисене пролетарилле интернационализм майлӑ воспитани парасси тата буржуалла националлизмӑн пур тӗрлӗ палӑрӑмӗсене те хирӗҫ татӑклӑн кӗрешесси пулать.

Пирӗн партин СССР Союзӗнчи халӑхсен пӗрлӗхӗпе туслӑхне куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек сыхласа усрать тата малашне те сыхласа усрӗ, нумай нациллӗ Совет государствине тӗреклетет тата ӳлӗмрен те тӗреклетӗ, мӗнпур тӑшмансен Совет государствин вӑй-хӑвачӗ—пирӗн Совет государствин вӑй-хӑвачӗ—пирӗн ҫӗршыври хӑвачӗ—пирӗн ҫӗршыври мӗнпур халӑхсен туслӑхӗ коммунизмӑн анлӑн туса ҫитермелли чи кирлӗ условия.

Пирӗн хӑватлӑ Тӑван ҫӗршыври мӗнпур халӑхсем Коммунистсен аслӑ партийӗпе тӑван Совет правительстви тавра тачӑ пӗтӗҫсе тӑраҫҫӗ. Парти, правительство тата совет халӑхӗ тачӑҫӗн пӗтӗҫнине тата туслӑ та тӑванла ҫемьепе эпир хамӑрӑн чаплӑ тӗллев патне—коммунизм патне—шанчӑклӑн малалла пыратпӑр.

(«ПРАВДА» хаҫатӑн июлӗн 12-мӗшӗнчи умсӑтавӗнчен).

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тавра тачӑрах пӗтӗҫер!

* * * *

Халӑхсен туслӑхӗ ытларах ҫирӗплентӗр

ФРУНЗЕ, июлӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Хулари малта пыракан предприятири — «Красный металлист» заводри рабочисемпе служащисем КПСС Центральнӑй Комитечӗн пленумӗн решенийӗсене СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн постановленийӗ ҫинчен пӗлтернине пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ. Механически цехри паллӑ слесарь А. Сергиенко ҫӑмах илет. Вӑл ҫапла калать:

— Империализмӑн тарҫи, пӗтӗм совет ҫыннисен ылханлӑ тӑшманӗ Берия пирӗн ҫӗршыври халӑхсен туслӑхне аркатма, пирӗн Коммунистсен партине ҫӗмӗрме шут тытнӑ. Ӗҫ тухмарӗ! Пирӗн тӑван Коммунистсен партийӗ буржуалла перерожденецӑн маскине сирсе пӑрахрӗ, тӑшманла ӗҫсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларчӗ. Тӑшмана тивӗҫлипе айӑплӗҫ. Эпир малашне те, парти вӗрентсе пынӑ пек, хамӑрӑн революциллӗ сыхлӑхӑ ӳстерӗпӗр. Эпир хамӑрӑн социализмла Тӑван ҫӗршыв вӑйхӑватне ӳстерессишӗн ырми-канми тӑрашма пулатпӑр.

Партире тӑман работница С. Алмусова ҫапла калать:

— Эпир Совет Союзӗнчи коммунизм строительствин пысӑк ӳсӗмӗсене тӑван Киргизстан тӗслӗхӗнчен те аван куратпӑр. Пирӗн нумай нациллӗ государствӑри халӑхсен туслӑхӗ султан-ҫул вӑйлӑн ҫирӗпленсе пынипе эпир лайӑх тӳйса тӑратпӑр. Ҫав туслӑха тӗнчери реакциллӗ вӑйсем темӗнле тапӑҫланни те хавшатаймасть.

Трикотаж фабрики коллективӗн пухӑвӗнче сыхакан машинӑсен участокӗнче ӗҫлекен мастер О. Кочвева сӑмах калать.

— Ирсӗр авантюрист Берия преступникла ӗҫне ҫапса ҫӗмӗрес енӗпе партин Центральнӑй Комитечӗ вӑхӑтра йышӑннӑ татӑклӑ мерӑсене эпир пӗтӗмпех ырлатпӑр,—терӗ вӑл.—Карьерист тата буржуалла перерожденец, империализмӑн агенчӗ Берия пирӗн партие аркатса тӑкас тӗллевпе партие тата ҫӗршыва ертсе пырассине хӑйӗн аллине тытса илме ӗмӗтленнӗ, партин нумай ҫулсем хушшинче туса хатӗрленӗ политики вырӑнне капитулянтла политика тума, капитализма каялла тавӑрмалли политика туса тума шутланӑ. КПСС Центральнӑй Комитечӗн решенине Киргизи столицинчи Сельмашзаводра, ВЛКСМ ячӗпе тӑракан ҫӗвӗ фабрикинче, типолитографире тата ытти предприятисемпе учрежденисенче ӗҫлекенсен коллективӗсем те пӗр ҫын пек пулса ырланӑ.

КПСС Центральнӑй Комитетне халӑх вӗҫӗ-хӗррисӗр шанса тӑрать

ЧЕЛЯБИНСК, июлӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Хулари предприятисенче ӗҫҫыннисен пухӑвӗсем пулса иртрӗҫ. Рабочисем, инженерсем, техниксем, служащисем пурте пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса КПСС Центральнӑй Комитечӗн постановленине ырлаҫҫӗ.

Челябинскри ферросплав заводӗнчи пухура ӗҫҫыннисем нумай пулнӑ. Партин Челябинск хула комитечӗн секретарӗ Петрова юлташ КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ йышӑннӑ постановлени ҫинчен туса панӑ доклада металлургсем тимлӗн итленӗ.

— Эпир, металлургсем, Тӑван ҫӗршывӑн усал та тискер тӑшманне, империализмӑн агентне Берияна ылханса питлетпӗр,—терӗ аслӑ плавильщик Спиридонов.—Ирсӗр, уттарлӑ майсемпе усӑ курса, вӑл, буржуазине сутӑнакӑскер, влаҫа хӑйӗн аллине ярса илесшӗн пулнӑ, партипе правительствӑн вӑй-хӑватне хавшатасшӑн пулнӑ. Тӑшман хуть те мӗнле чеелӗхе пытансан та пирӗн парти, пирӗн халӑх ҫав тӑшмана тупатех, унӑн сиенлӗ ӗҫне пӗтеретех. Ялавах ҫавӑн пек пулнӑ, малашне те ҫавӑн пекех пулӗ. Пирӗн мирлӗ ӗҫе кансӗрлеме хӑтланакан империалистсем ҫапла астуса тӑчӑр. Эпир хамӑр Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн тата лайӑхрах ӗҫлӗпӗр, Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫсе тӑратпӑр.

Челябинскри ытти заводсенче те рабочисемпе служащисен пухӑвӗсем пулса иртнӗ.

Металлургсемпе машиностроительсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ йышӑннӑ постановление чунтан ырланӑ, сыхлӑхӑ вӑйлатма, коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн вӑя хӗрхенмесӗр ӗҫлеме сӑмах панӑ.

ХАБАРОВСК, июлӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Хабаровск крайӗнчи предприятисемпе колхозсенче тата учрежденисенче КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗн решенийӗсене ӳсӗме яваҫҫӗ. Рабочисемпе служащисем, колхозникемсемпе металлистсем тата строительсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн Президиумӗ Берияна партипе государствӑна хирӗҫ туса пынӑ ирсӗр ӗҫӗсене вӑхӑтра тата татӑклӑн тӑрӑ шыв ҫине кӑларнине пурте пӗр кӑмӑллӑ пулса ырлаҫҫӗ.

Хабаровскри заводӗнчи коллективӑн пухӑвӗнче Миловановн оператор ҫапла калать:

— Эпир партин Центральнӑй Комитетне, вӑл Берияна тӑшманла ӗҫӗсене вӑхӑтра путарса лартнӑшӑн, хӗрӳллӗн тав тӑватпӑр. Хамӑрӑн юратнӑ партипе тӑван Совет правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫер. Хамӑрӑн вӑй ӗҫсемпе социализмла Тӑван ҫӗршывӑн тӗрекне тата хытӑрах ҫирӗплетер!

Нагаев бухтинчи пулӑ тытакансен бригадирӗ Севицкий юлташ пулӑҫсен пухӑвӗнче ҫапла каланӑ:

— Камчаткӑпа Охотск ҫыранӗсенче тата Амур шывӗ хӗрринче ҫӗнӗ предприятисем ӳсе ларчӗҫ. Ҫӗнӗ хуласемпе поселоксем ҫуралчӗҫ. Вӗсенче шкулсем, больницӑсем, клубсем пур. Вырӑссемпе чукчасем, корякcемпе эскимоссем туса хунӑ культурӑллӑ пурӑнаҫҫӗ. Ҫак телейлӗ те хавасла пурнӑҫа пиртен халӑхӑн чи хаклӑ тӑшманӗ Берия туртса илесшӗн пулнӑ.

Коммунистсен партийӗ ӑслӑн ертсе пынипе совет халӑхӗ коммунизм патне хӑюллӑн та шанчӑклӑн утать. Хамӑрӑн аслӑ планесене пурнӑҫа кӗртсе пыма пире тӗнчери нимӗнле хура вӑй та пӳлсе тӑраймӗ ҫук!

Крайра пулса иракан пухусенче ӗҫҫыннисен Тӑван ҫӗршывшӑн, коммунизмшӑн тата хастарлӑрах ӗҫлеме пулаҫҫӗ.

* * *

УЛЬЯНОВСК, июлӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Хулари заводсемпе фабрикӑсенче КПСС Центральнӑй Комитечӗн пленумӗн решенийӗсене ӳсӗме явас тӗлӗшпе ӗҫҫыннисен пухӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ.

Двигательсем тӑвакан завод коллективӗн пухӑвӗнче КПСС хула комитечӗн секретарӗ Васильева юлташ сӑмах калать. Ун хыҫҫӑн рабочисем, инженерсем, техниксем Берияна ылханлӑ ӗҫӗсене те рӑхса питлерӗҫ.

Бутусова токарь ҫапла калать:

— Эпир Коммунистсен партийӗпе совет халӑхӗн ылханлӑ тӑшманне—ирсӗр Берияна пӗтӗм чун-чӗререн тарӑхса питлетпӗр. Ҫав, тӗнчери империализма сутӑннӑ тарҫӑ, руководствӑна хӗсӗнсе кӗрсе, совет халӑхне коммунизм тума чӑрмантарасшӑн пулнӑ.

Эпир, совет ҫыннисем, Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫетпӗр. Совет халӑхӗ КПСС Центральнӑй Комитетне вӗҫӗ-хӗррисӗр шанса тӑрать.

ВЦСПС Президиумӗнче

Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральнӑй Совечӗн Президиумӗ, профсоюзсен Центральнӑй Комитечӗсен председателӗсемпе пӗрле, КПСС Центральнӑй Комитечӗн пленумӗ «Берия партие тата государствӑна хирӗҫ тунӑ преступникла ӗҫсем ҫинчен» йышӑннӑ постановлени пӗр шухӑшлӑ пулса пӗтӗмӗшпех ырлать тата ӑна пӗр пӑрӑлланмасӑр пурнӑҫа кӗртме йышӑнать.

Ирсӗр сутӑнчӑка, авантюриста, пӗтӗм тӗнчери империализмӑн агентне, Коммунистсен партийӗпе совет халӑхӗн тискер тӑшманне Берияна вӑхӑтра тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑшӑн тата унӑн преступникла ӗҫне пӗтерсе лартнӑшӑн ВЦСПС Президиумӗ миллионшар рабочисемпе служащисен ячӗпе партин Центральнӑй Комитетне Президиумне тав тӑвать.

Берияна преступникла авантюрине пӗтерни тата тӗп тума ҫук ҫакна кӑтартса парать: ют ҫӗршывсенчи империалистсен Совет ҫӗршывне хирӗҫ тума палӑртнӑ кирек мӗнле плансене те партин, правительствӑн тата халӑхӑн никӗм аркатайми пӗрлӗхӗ ҫапса хуҫнӑ, малашне те ҫапса хуҫӗ.

Совет халӑхӗ социализм тӑвассишӗн кӗрешес, халӑхӑн кирек мӗнле тӑшманне ҫапса аркатса ӗҫре пирӗн партие пӗр чарӑнми кӗрешӳре хӗрӗх ҫулсем тӳлли ӗҫсем тупса панӑ.

Парти речӗсен пӗрлӗхӗ совет халӑхне Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи чи вывӑр хушсене ҫӗнтерӳ туса тухма пулӑшрӗ, парти речӗсен пӗрлӗхӗ коммунизм патне шанчӑклӑн пыракан совет обществине пурнӑҫлаххӑн пысӑк вӑйӗ пулса тӑрӗ, малашне те пулса тӑрӗ.

Совет Союзӗн ӗҫҫыннисем ҫакна курасҫӗ: И. В. Сталин вилнӗ хыҫҫӑн Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ ҫӗршывӑн пӗтӗм пурнӑҫне пӗр майлӑ тӗрӗс ертсе пырать, Тӑван ҫӗршывӑн экономикипа оборона вӑй-хӑватне ҫирӗплетрӗ, халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслӗсене те татти-сыпписӗр аталантарса пычӗ, совет ҫыннисен пурнӑҫне малалла лайӑхлатрӗ, Совет Союзӗн пӗтӗм тӗнчери лару-тӑрӑвне тата авторитетне ӳстерчӗ.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ партипе советсен организацийӗсен хуҫалӑх строительствинчи тата ӗҫҫыннисене коммунизма воспитани парас ӗҫӗнчи ҫитменлӗхӗсене палӑртрӗ. Ҫавӑн пек ҫитменлӗхсем профсоюзсен ӗҫӗнче те пур.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗн постановленийӗнчен профессиллӗ союзсен кирлӗ вывод тумалла, Берия ӗҫӗнчен политикӑлла урок тумалла.

Профсоюзсем хӑйсен ӗҫне лайӑхатса ҫӗнетсе пымалла, хамӑр ҫӗршыври коммунизм тӑвассишӗн парти XIX-мӗш съездӗ йышӑннӑ историллӗ решенисене пурнӑҫлама массӑсен творчествӑллӑ вӑйӗне активлӑхне мобилизацилемелле.

Ҫав задачӑсене анлӑн пурнӑҫлама профсоюзсен демократине пӗр пӑрӑлланмасӑр аталантармалла, коллективлӑ ӗҫлемелли йӗркене ҫирӗп пурнӑҫламалла, революцилле сыхлӑха пур майсемпе те ӳстермелле, самокритикӑна, уйрӑмах профсоюз тата хуҫалӑх ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене палӑртса аялтан критиклеменӗ сарма пулӑшмалла, массӑсемпе ҫыхӑну тытассине ҫине тӑрса сармалла тата тӗрелетмелле. Ӗҫҫыннисен ыйтӑвӗсем ҫине тимлӗ пӑхасси, вӗсен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатассишӗн куллен тӑрӑшасси—профсоюзсен таса тивӗҫӗ.

Рабочисемпе служащисене коммунизмӑн аслӑ ӗҫӗ пурне те ҫӗнтересине ӗненсе тӑма, пирӗн партипе социализмла Тӑван ҫӗршыва вӗҫӗ-хӗррисӗр юратма, СССР Союзӗнчи халӑхсен ниҫхан хавшами туслӑхӗпе пролетарилле интернационализм шухӑшӗ майлӑ воспитани парас ӗҫе лайӑхлатасси профсоюзсен пысӑк задачи пулса тӑрать.

ВЦСПС Президиумӗ Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ ҫапла шантараҫҫӗ: профсоюзсем Совет ҫӗршывӗн рабочисене, служащийӗсене Коммунистсен партийӗн тата унӑн Центральнӑй Комитечӗн шанчӑклӑ тӗрекӗ пулнӑ, халӗ те пулса тӑраҫҫӗ, малашне те пулса тӑрӗҫ.

ВЦСПС Президиумӗ КПСС Центральнӑй Комитечӗ ҫапла шантарать: пирӗн ҫӗршыври рабочисем, служащисем, интеллигенци Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн, Центральнӑй Комитет тата Совет правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫӗҫ, вӗсем пӗтӗм хӑйсен творчествӑллӑ хастарлӑхне пӗтӗм вӑйне коммунизм тумалли пысӑк программа анлӑн пурнӑҫласа пыма мобилизациллӗҫ.

Выльӑх апачӗ ытларах хатӗрлер!

Ӑмӑртакан районсенче

(Июлӗн 10-мӗшӗ тӗлне)

ТӐВАЙ		ВӐРМАР
55,8	Утӑ ҫулнӑ (планпа пӑхниччен процентпа)	29,1
17,1	Капана хывнӑ (ҫулниччен процентпа)	46,3
7,0	Силос хывнӑ (планпа пӑхниччен процентпа)	13,4

Вӑрмар районӗнче утӑ ҫулса пухасси кая юлса пырать. Ку ӗҫе хӑвӑртлатмасан, тӑкаксем пуласси паллах.

Тӑвай районӗнче ҫулнӑ курӑксене капана хывасси ытла та япӑх. Силос хывма та колхозсем васкамаҫҫӗ.

Выльӑх апачӗ хатӗрлессине хакламаҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКИ, июлӗн 13-мӗшӗ. (Телефонпа). Районти хӑшпӗр колхозсем улӑх ути, нумай ҫул ӳсекен курӑксем ҫулмалли, силос хывмалли плана ирттерсе тултарчӗҫ. Ку тӗлӗшпе уйрӑммӑнах «Партизан» колхоз лайӑх тӗслӗхсем кӑтартрӗ. Колхозниксем Ҫавал тӑрӑхӗнче 82 гектар ҫинче утӑ ҫулса пуҫха кӗртрӗҫ. Утӑ тухӑҫлӑхӗ пысӑк. Овсяницӑпа тимофеевкӑна та пысӑк пахалӑхпа пухса кӗртнӗ. Унӑн тухӑҫлӑхӗ иртнӗ ҫулхинчен 1,5 хут пысӑкрах. Колхоз акнӑ курӑксене ҫулмалли плана ирттерсе тултарчӗ. Кӑҫал вылӑх кӑшманӗ чылай лартнӑ. Колхозниксем кашни гектартан 220 центнертан кая мар кӑшман пуҫха кӗртессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Кӑшман ревсем хушшинче икӗ хутчен культиваци тунӑ.

Колхозра силос хывас ӗҫ те хӗрӳллӗн пырать. Паянхи куна 60 тонна ытла силос хывнӑ.

Мичурин ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗнчи колхозниксем те силос хывас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Силос хывмалли плана 50 процент тултарнӑ.

Анчах, пӗтӗмӗшпе илсен, районта вылӑх-чӗрлӗх валли апат хатӗрлесси ҫителӗксӗр пулса пырать-ха. Силос хывмалли плана район 10 процент кӑна тултарнӑ. Колхоз руководителӗсем силос хывма курӑксен ҫителӗксӗр тесе ларасҫӗ. Анчах [illegible] пыракансен опычӗ ҫак ҫиенне шухӑша сирсе пӑрахать.

«Волга» колхозра вылӑхсем валли апат сулсерен ҫителӗксӗр пулать. Савӑнпа та вылӑх-чӗрлӗхӗн тухӑҫлӑхӗ пӗчӗккӗ. Кӑҫал 6 уйӑх хушшинче кашни ӗнерен 216-шар литр кӑна сӗт суса илнӗ. Сапах колхоз руководителӗсем вылӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫе хакламаҫҫӗ. Силос хывма тытӑнман, утӑ ҫуласси те ҫителӗксӗр хӑвӑрт пулса пырать.

Киров ячӗпе, Буденный ячӗпе тӑракан колхозсенче те вылӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫ начар пырать.

Вылӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫре МТС та колхозсене начар пулӑшать. МТС-ӑн 4,200 тонна силос хывмалла, анчах 223 тонна кӑна хывнӑ. Утӑ ҫулмалли 400 гектар вырӑнне 22 гектар ҫинче кӑна ҫулнӑ. МТС-ри силос агрегачӗсем, ҫавӑлмар пирки, ӗҫлемесӗр ларасҫӗ.

Районти ялхуҫалӑх органӗсем управлениӗн вылӑх апачӗ хатӗрлес пӗҫене оперативлӑ ертсе нимасть, малта пыракансен опытне ытти колхозсен хушшинче сарма тӑрӑшмасть. Колхозсем хушшинче социализмла ӑмӑртӑва йӗркелемен.

Н. ОРЛОВ.
(Хамӑр корр.).

ЧӐВАШ АССР-ӗнчи КОЛХОЗСЕНЧЕ ВЫЛЬӐХ АПАЧӖ ХАТӖРЛЕС ӖҪ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ ҪАТАРТАКАН СВОДКА

Июлӗн 10-мӗшӗ тӗлне (процентпа)

Районсем	Ҫаран ути ҫулнӑ	Акнӑ курӑксем ҫулнӑ	Силос хывнӑ
Улатӑр	48	43	8
Элӗк	75	42	4
Вӑрнар	62	46	11
Йӗпреҫ	59	32	12
Ишлей	56	20	[illegible]
Калинино	44	33	[illegible]
Канаш	57	15	[illegible]
Куславкка	60	17	[illegible]
Комсомольски	49	53	[illegible]
Красноармейски	78	42	[illegible]
Хӗрлӗ Чутай	85	41	[illegible]
Кувакино	140	45	[illegible]
Сӗнтӗрвӑрри	36	34	[illegible]
Муркаш	90	29	[illegible]
Октябрьски	41	14	[illegible]
Первомайски	44	45	[illegible]
Пӑрачкав	85	39	[illegible]
Советски	105	25	[illegible]
Сӗнтӗр	87	43	[illegible]
Вӑрмар	64	21	[illegible]
Ҫӗрпӳ	65	34	[illegible]
Шупашкар	72	36	[illegible]
Чкаловски	32	28	[illegible]
Чурачӑк	73	32	[illegible]
Шӑмӑршӑ	73	15	[illegible]
Шӑхасан	54	40	[illegible]
Ҫӗмӗрле	78	41	[illegible]
Етӗрне	83	54	[illegible]
Елчӗк	37	22	[illegible]
Тӑвай	70	20	[illegible]

Машинӑсен шучӗ ӳсет

ОКТЯБРЬСКИ. Машина-трактор станцийӗнче ялхуҫалӑх машинисен шучӗ ӳсет.

Нумаях пулмасть машина-трактор станцине «ДТ-54» тракторсем, «СЗТ-4» йышши сеялкӑсем, самоходнӑй комбайнсем килчӗҫ.

Халӗ районти колхозсен уй-хирӗсенче 17 трактор бригади ӗҫлет.

В. ТРОФИМОВ.

Шупашкар хулинчи тата республикӑри коммунистсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗн постановленине пӗр шухӑш-кӑмӑлпа ырлаҫҫӗ

КПСС Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн Шупашкар хулинчи тата республикӑри парти активӗпе пӗрле ирттернӗ пӗрлешӳллӗ пленумӗ

Виҫӗмкун Шупашкар хулинче, Чӑваш академи театрӗнче, КПСС Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн Шупашкар хулинчи тата республикӑри парти активӗпе пӗрле пухӑннӑ пӗрлешӳллӗ пленумӗ пулса иртрӗ. Пленумра 700 ҫынна яхӑн пулчӗ.

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитет Пленумӗн ӗҫӗсем ҫинчен парти обкомӗн секретарӗ Ахазов юлташ доклад туса пачӗ. Вӑл КПСС Центральнӑй Комитечӗ йышӑннӑ постановлене те вулаеа пачӗ.

Докладчикпа прениое тухса калакансем КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ йышӑннӑ решенисем партипе пӗтӗм совет халӑхӗшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулни ҫинчен каларӗҫ, социализмла Тӑван ҫӗршыв интересӗсене сутнӑ ирсӗр тӑшманӑн Берин преступникла ӗҫӗсене пӗтерсе лартас тӗлӗшпе КПСС Центральнӑй Комитечӗн Президиумӗ вӑхӑтра йышӑннӑ татӑклӑ мерӑсене пӗр шухӑш-кӑмӑлпа ырларӗҫ.

Пленум участникӗсем ҫавна пысӑк хавхаланупа палӑртрӗҫ: И. В. Сталин вилнӗренпе иртнӗ тӑватӑ уйӑх хушшинче КПСС Центральнӑй Комитечӗ ҫӗршывӑн пӗтӗм пурнӑҫне йӗркеллӗ те тӗрӗс ертсе пычӗ, партипе совет халӑхне коммунизм строительствин задачисем тавра пӗтӗҫтерес, пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн экономикӑпа оборона хӑватне тӗреклетес, рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, пӗтӗм совет ҫыннисен пурнӑҫне малалла лайӑхлатас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттерчӗ.

— Пирӗн парти хӑватлӑ та пӗтӗҫӳллӗ, вӑл халӑх массисемпе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать,—терӗ КПСС Шупашкар хула комитечӗн секретарӗ Никитин юлташ.—Вӑл пирӗн ҫӗршыва коммунизм ҫулӗпе ӑнӑҫлӑн ертсе пырать. Совет халӑхӗ коммунизм строительствинче тунӑ ҫитӗнӳсем тӑшмансене ҫав тери тарӑхтарса уртараҫҫӗ, ҫав тӑшмансем Совет Союзне хирӗҫ ирсӗр ӗҫсем тӑвассине вӑйлатрӗҫ. Ҫавна шута илсе, пӗтӗм тӗнчери империализм тарҫи Берия пирӗн ҫӗршывра власа хӑй аллине тытса илме тӗллев лартнӑ. Берийӑн партие тата государствӑна хирӗҫле преступникла ӗҫӗсене пӗтерсе лартас тӗлӗшпе партин Центральнӑй Комитечӗн Президиумӗ вӑхӑтра тата татӑклӑ мерӑсем йышӑнчӗ. Ҫав мерӑсене Шупашкар хулинчи коммунистсемпе мӗнпур ӗҫҫыннисем хӗрӳллӗн ырлаҫҫӗ.

КПСС Шупашкар райкомӗн секретарӗ Зайцев юлташ ҫапла каларӗ:

— Берийӑн преступникла ӗҫӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑшӑн пирӗн районти коммунистсемпе мӗнпур ӗҫҫыннисем, нумай нациллӗ пӗтӗм совет халӑхӗ пекех, партин Центральнӑй Комитетне пӗтӗм чӗререн тав тӑваҫҫӗ. Эпир татӑклӑн ҫапла калатпӑр: эпир коммунизм патне пырассине нимӗнле тӑшмансем те, нихҫан та тытса чараймӗҫ. Совет халӑхӗн тӑшманӗсем тунӑ ирсӗр ӗҫсене питлесе, эпир хамӑрӑн ретсене Коммунистсен партийӗпе унӑн Центральнӑй Комитечӗ тавра тата тачӑрах пӗтӗҫтеретпӗр.

Берийӑн партие тата государствӑна хирӗҫле ӗҫӗсене пӗтерсе лартас тӗлӗшпе КПСС Центральнӑй Комитечӗн Президиумӗ Пленумӗ йышӑннӑ решенисене хӗрӳллӗн ырласа, облпрофсовет председателӗ Романова юлташ республикӑри профсоюз членӗсен ячӗпе каларӗ. Вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче коммунизм тӑвасшӑн пыракан кӗрешӳре совет профсоюзӗсем Коммунистсен партийӗн шанчӑклӑ тӗрекӗ пулни ҫинчен тата ку вӑл малашне те ҫавӑн пекех пуласси ҫинчен каларӗ.

Пленумӑн пур участникӗсем те коммунистсемпе пӗтӗм совет халӑхӗн революциллӗ сыхӑлӑхне ӳстерме кирли ҫинчен каларӗҫ.

— Питех те ҫирӗп революциллӗ сыхӑлӑх,—терӗ Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен министрӗ Вакарев юлташ,—пирӗн никам пӑсайми закон пулмалла. Революциллӗ сыхӑлӑх тӑшмансене хирӗҫ кӗрешес ӗҫре пирӗн партин тӗрӗсленнӗ хӗҫпӑшалӗ пулса тӑрать.

Республикӑри Шалти ӗҫсен министерствин ҫитменлӗхӗсем ҫинчен каласа, Вакарев юлташ партин районсемпе хуласенчи комитечӗсем министерствӑн вырӑнсенчи органӗсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене татӑклӑн сивлеменнине, ҫав органсен ӗҫне тӗрӗслесси не кулленех туса пыманнине палӑртрӗ.

— Шалти ӗҫсен министерствин аппаратне,—терӗ малалла Вакарев юлташ, — парти организацийӗсен пысӑк пулӑшу памалла. Уйрӑмах аппарата кадрсемпе ҫирӗплетес, пуҫламӑш парторганизацисен рольне ӳстерес енӗпе пысӑк пулӑшу кирлӗ, аппарат мӗнле ӗҫленине пӗрмаях тӗрӗслесе, ҫитменлӗхсене пӗтерсе пымалла, кадрсене марксистла-ленинла пӗлӳсем памалла. Эпир, чекистсем, парти руководствин ҫине таянса тӑрӑпӑр, критикӑпа аялтан килекен критикӑна анлӑн сарса пырӑпӑр, ӗҫри ҫитменлӗхсене татӑклӑн пӗтерсе пырӑпӑр, халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ тата татӑклӑнрах кӗрешӗпӗр!

Трибуна ҫинче—Шупашкарти электроаппаратура заводӗнчи сварщик Кузнецов юлташ.

— Социализмла государство хӑвачӗн никӗсӗсен никӗсӗ ҫине—пирӗн ҫӗршыври халӑхсен туслӑхӗ ҫине—пӗтӗм тӗнчери империализмӑн ирсӗр тарҫи Берия алӑ хунӑ. Халӑхӑн ирсӗр тӑшманӗ, унччен тӑшмансем пекех, путланса ларчӗ. Пирӗн ҫӗршыври халӑхсен туслӑхне никам та тӗкӗнеймен, тӗкӗнеймест те тата малашне те тӗкӗнеймӗ. Ҫак туслӑха никам та аркатаймасть. Эпӗ—чӑваш, чӑваш халӑхӗ ячӗпе эпӗ: пире аслӑ вырӑс халӑхӗнчен уйӑрма пултаракан вӑй ҫук, тесе калаҫшӑн. ССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑхӗ — пирӗн ирӗклӗхӗн, пирӗн телейлӗ пурнӑҫӑн шанчӑкӗ.

Докладчикпа прениое тухса калакансем ҫакна палӑртрӗҫ: КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗн решенийӗнче хуҫалӑх строительствин чылай участокӗсенче тата ӗҫҫыннисене коммунизмла воспитани парас ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пурри ҫинчен кӑтартса пани партин Чӑваш организацине те пырса тивет. Республикӑра юлса пыракан предприятисем сахал мар, промышленноҫӑн хӑшпӗр отраслӗсем те юлса пыраҫҫӗ. Юлса пыракан колхозсем те нумай. Ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхӗпе выльӑх-чӗрлӗх тупӑшлӑхӗ пӗчӗк.

Партилле-организацилле тата идеологилле ӗҫсенче те пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Партин хӑшпӗр райкомӗсемпе хула комитечӗсем коллективлӑ руководство принципӗсене пӑсаҫҫӗ, пленумсем пухмалли сроксене пӑхӑнмаҫҫӗ, критикӑпа самокритикӑна сарса пымаҫҫӗ. Чылай парторганизацисенче коммунистсен пухӑвӗсем сайра хутра кӑна пулаҫҫӗ.

Идеологилле ӗҫе лайӑхлатас тӗлӗшпе тӑракан задачӑсем ҫинчен КПСС обкомӗн секретарӗ Ислюков юлташ каларӗ.

— Коммунистсемпе ӗҫҫыннисене идейӑлла воспитани парас ӗҫе,—терӗ вӑл,—партин область организацийӗнче ҫителӗксӗр туса пынӑ тесе йышӑнас пулать. Идеологиллӗ ӗҫе парти обкомӗ, партин хула комитечӗсемпе райкомӗсем тивӗҫлипе ертсе пымаҫҫӗ. Пирӗн кадрсене марксизм-ленинизм идейисемпе пиҫӗхтересси, вӗсене коммунизм ӗҫӗшӗн кӗрешекен ҫирӗп борецсем пулма воспитани парасси идейӑлла воспитани ӗҫӗнче тӗп вырӑн йышӑнмалла.

Ислюков юлташ партилле пропаганда ӗҫӗнче, марксизм-ленинизма вӗренес ӗҫре начетничество нумай пулнине палӑртрӗ. Марксистла-ленинла теори—догма мар, ку теори ӗҫри руководство пулса тӑрать. Научнӑй коммунизм идейисем мӗнпур коммунистсен, пирӗн мӗнпур кадрсен ӗҫӗнче палӑрса тӑмалла.

Малалла Ислюков юлташ партин Чӑваш область организацийӗнче историре уйрӑм ҫын мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине марксистла-ленинла ӑнланса илес тӗлӗшпе ҫитменлӗхсем пулнине палӑртрӗ. Коммунистсен партийӗн рольне тӗрӗс ӑнлантарса парас вырӑнне, партилле пропаганда уйрӑм ҫынсене ытла пысӑка хурса мухтас ҫул ҫине тӑнӑ, ҫакӑ вӑл партипе унӑн ертсе пыракан чӑмӑрӗн рольне пӗчӗклетесси патне, парти массисемпе ӗҫҫыннисен анлӑ массисен творчествӑлла пуҫарулӑхне чакарасси патне илсе пырать.

КПСС Улатӑр хула комитечӗн секретарӗ Чистопольский юлташ, идеологилле ӗҫе лайӑхлатма кирли ҫинчен каласа, чылай парторганизацисенче коммунистсем дисциплинӑна пӑхӑнманнине палӑртрӗ. Идейӑлла воспитани ӗҫне татӑклӑнах лайӑхлатас пулать, ку вӑл парторганизацисен кӗрешӳ пултарулӑхне ӳстерме май парать.

Пренире ҫавӑн пекех облвоенкоматри политотдел начальникӗ Васьнин юлташ, КПСС Етӗрне райкомӗн секретарӗ Хромов юлташ, Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен министерствин пайӗн начальникӗ Кордус юлташ, Чӑваш пединститут директорӗн заместителӗ Наховский юлташ тата ытти- сем те—пурӗ 14 ҫын тухса каларӗҫ.

КПСС Чӑваш обкомӗпе хула комитечӗн пленумӗ, пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса, КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗн постановленине пӗтӗмӗшпех ырларӗ тата ӑна пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫласа пыма йышӑнчӗ.

Пленум решенийӗнче республикӑри парторганизацин пӗтӗм ӗҫне лайӑхлатмалли мерӑсене палӑртса хунӑ.

«КПСС Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн активпа пӗрле ирттернӗ пӗрлешӳллӗ пленумӗ,—тенӗ решенире,—партин Центральнӑй Комитетне ҫапла шантарать: партин Чӑваш область организацийӗ, Совет Союзӗнчи Коммунистсен партине парӑнса ӗҫлесе, хӑйӗн речӗсене КПСС Центральнӑй Комитечӗ тавра тата тачӑрах пӗтӗҫтерӗ тата, вӑл тӗрӗс ертсе пынипе, Советлӑ Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисене парти туса хатӗрленӗ политикӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн, пирӗн ҫӗршывра коммунизм тумалли пысӑк программӑна пурнӑҫлассишӗн кӗрешме мобилизацилесе пырӗ».

Куславкkари ҫуртсем тӑвакан заводӑн столярнӑй цехӗнче ӗҫлекен станочница-стахановка Н. П. Белова ӗҫ нормине кулленех ирттерсе тултарать. Вӑл — поселок Совечӗн депутачӗ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Н. П. Белова юлташ ӗҫре.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Сӑнав участокӗсенче

ЭЛӖК. Шкулсем ҫумӗнчи сӑнав участокӗсем вӗренекенсемшӗн лаборатори пекех пулса тӑраҫҫӗ. Сӑнав участокӗсенче вӗренекенсем малта пыракан мичуринла агротехникӑпа паллашаҫҫӗ, пысӑк тухӑҫлӑ тырпул тата пахча ҫимӗҫ тума вӗренеҫҫӗ.

Шарыпкӑри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта ачасен ҫуллахи практикӑлла ӗҫне лайӑх йӗркеленӗ. Кунти сӑнав участокӗнче кишӗрпе кӑшман, суханпа купӑста, хӑярпа помидор парка ӳсеҫҫӗ.

Садра ҫӗр тӗп ытла улмуҫҫи ӳсет. Вӗсен ҫывӑхӗнчи ҫумкуракӗсене ҫумласа, ҫӗрне кӑпкалатса тӑраҫҫӗ. Хӑмла ҫырли плантацийӗнче кӑҫал ҫырла нумай пуҫтарса илме шанчӑк пур. Шкул ачисем хӑйсем тунӑ пӗвере пулӑ ӗрчетме вӗренеҫҫӗ. Пулӑсене пӗсернӗ улма, шӳтернӗ тырӑ параҫҫӗ.

Сурӑмпуҫ Шӗмшешри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул участокӗнче те сӑнав ӗҫӗсем ҫулленех лайӑхланса пыраҫҫӗ. Кунта кашни ҫулах вӑрлӑх тума кӑшманпа кишӗр лартса ӳстереҫҫӗ. Кӑҫал Чапаев ячӗпе тӑракан колхоза 12 килограмм кӑшман, 3 килограмм кишӗр вӑрри хатӗрлесе панӑ тата колхозниксене сутнӑ. Урокра вӗреннисене ҫирӗплетме сортлӑ хӑмла ҫырли плантацийӗ тунӑ, унта пӗр тата икӗ йӗркепе хурӑн ҫырли лартнӑ. Питомникри улмуҫҫисем аван ӳсеҫҫӗ, кӑҫал тата 50 улмуҫҫи таран папкапа сыпма хатӗрленеҫҫӗ. Участокра арбуз, кабачки, кукуруза, соя ӳстереҫҫӗ. Виноград тӗмӗсем те ерипен аталанаҫҫӗ.

Ураскилтри вӑтам шкулта вӗренекенсем кӑҫал хӑйсен участокӗ ҫине 20 тӗп черешня лартнӑ тата 0,03 гектар ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче мичурински сорт—«техас» текен—хӑмла ҫырли плантацине тунӑ. Ҫак ӗҫре вӗсене Якуртушкӑнри (Ҫӗмӗрле районӗ) пуҫламӑш шкул пулӑшнӑ. Федотова учительница тӑрӑшнипе вӗренекенсем пахча ҫимӗҫсене аван пӑхса ӳстереҫҫӗ. Кӑнтӑрти ӳсентӑрансенчен — дыня, чумиза, могар, кабачки, суданка ӳстереҫҫӗ, помидорсен 9 сортне сӑнаҫҫӗ. Участок ҫинче вунӑ уйлӑ пуҫӑ ҫаврӑнӑшне йӗркелесе ҫитереҫҫӗ.

Элӗкри И. Я. Яковлев ячӗпе тӑракан вӑтам шкул участокӗ 0,5 гектар йышӑнать. Унта вӗренекенсен уйрӑм делянкисем шӑрҫа ярӑмӗ пек тӑсӑлса выртаҫҫӗ, тӗрлӗ пахча ҫимӗҫсем аван ӳсеҫҫӗ. Помидорсем чечеке ларнӑ, вӗсен турачӗсене иртнӗ. Йӑрансене ҫумкуракӗсенчен яланах тасатса тӑраҫҫӗ. А. Порфирьева учительница яланах ачасен участокри ӗҫӗсене йӗркелесе пырать, вӑйлӑ тырпулпа пахча ҫимӗҫ тумалли агротехника правилисемпе паллаштарать.

С. ТИХОНОВ.

СССР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствинче

Июлӗн 10-мӗшӗнче США-н ССР Союзӗнчи Вӑхӑтлӑх Повереннӑйӗ О'Шонесси господин СССР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен Министрӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский патӗнче пулса ӑна СССР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен Министрӗ В. М. Молотов ячӗпе ҫырнӑ ҫакӑн пек ҫыру панӑ:

«Сирӗн Превосходительство,

Президент мана ҫакӑн пек полномочи пачӗ: Германин Совет зонинчи условисем пирки, ҫав районти халӑх тӳсекен йывӑрлӑхсем ӳсе пынӑ пирки Президент ытлӑ пӑшӑрханни ҫинчен Сире пӗлтерме каларӗ. Ҫав районта халӑха апат-ҫимӗҫ парса тӑрасси пӗрмаях начарланса пынӑ пирки,—ку вӑл юлашки вӑхӑтра вырӑнти влаҫсене хирӗҫ демонстраци тунин йывӑр сӑлтавӗ пулнӑ,—Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви тата халӑхӗ уйрӑмах пӑшӑрханаҫҫӗ.

Пӗрлешӳллӗ Штатсем хӑйсен йӑлипе хӗн-хура, выҫлӑха тата чир-чӗрсене пур ҫӗрте те чакарма тӑрӑшнӑ. Хӑй Германие оккупацилесе тӑракан держава пулнӑ май, манӑн правительство Германи халӑхӗ лайӑх пурӑнтӑр тесе тивӗҫлипе интересленет. Манӑн правительствӑна унӑн Германири Верховнӑй комиссарӗ, ҫавӑн пекех тата канцлер Аденауэр та Германин хӗвелтухӑҫ пайӗнчи халӑха васкавлӑ пулӑшу кирли ҫинчен пӗлтернӗ.

Ҫавӑн пек пулӑшу кирлине асра тытса, ҫавӑнпа манӑн правительство оккупацилесе тӑракан держава пулса тӑракан Совет Союзне Хӗвелтухӑҫ Германири халӑх хушшинче валеҫме 15 миллион долларлӑха яхӑн апат-ҫимӗҫ пама сӗнет, вӑл шута тӗштырӑ, сахӑр, ҫусем, соя ҫӑвӗ тата ытти хӑшпӗр таварсем те кӗреҫҫӗ.

Апат-ҫимӗҫе мӗнле майпа валеҫмелли тата хӑш вырӑнта памалли йӗркене, паллах ӗнтӗ, Германири пирӗн влаҫсем палӑртса хатӗрлеме пултараҫҫӗ. Совет Правительстви ку ыйтупа решени йышӑннӑ хыҫҫӑнах Пӗрлешӳллӗ Штатсен Германири влаҫӗсем ҫав ӗҫе тӑвас пирки совет влаҫӗсене калӗҫ.

Пӗрлешӳллӗ Королевство тата Франци правительствисене ҫак сӗнӳ ҫинчен пӗлтернӗ.

Совет Правительстви ку сӗнӗве йышӑнни ҫинчен Эсир мана май килнӗ таран хӑвӑртрах пӗлтерӗр тесе шанса тӑратӑп, вара Хӗвелтухӑҫ Германири халӑх апат-ҫимӗҫ ҫитмен пирки хӗн курнине хӑвӑрт пӗтерме май пултӑр. Йывӑр килнӗ чухне вӑхӑта ахаль ҫухатмалла ан пултӑр тесе, апат-ҫимӗҫӗн малтанхи пайне халех Германири зонӑсен тата секторсен чиккисем патне илсе пыраҫҫӗ.

Сирӗн Превосходительство, эпӗ питӗ хисеплени ҫинчен пӗлтернине йышӑнӑр.

Элим О'ШОНЕССИ».

Июлӗн 11-мӗшӗнче СССР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен Министрӗ В. М. Молотов США Поверенӑйӗ О'Шонесси ҫырӑвӗ ҫине ҫакӑн пек ответ ярса панӑ:

«Хисеплӗ господин Поверенӑй,

Эсир июлӗн 10-мӗшӗнче панӑ ҫырура США Президенчӗ Германин хӗвелтухӑҫ пайӗнчи апат-ҫимӗҫ тӗлӗшпе пулса тӑнӑ лару-тӑру пирки пӑшӑрханнӑ пек пулни ҫинчен тата США Правительстви Германин ҫав пайне хӑшпӗр апат-ҫимӗҫ таварӗсем ярса пама тата апат-ҫимӗҫе унти халӑх хушшинче валеҫме 15 миллион доллар уйӑрни ҫинчен калатӑр.

Ҫавна май США Правительствине ҫакӑн ҫинчен асӑрхаттарни кирлӗ, тесе шутлатӑп.

Эсир пӗлтернинчен ҫакӑ курӑнать: Германин хӗвелтухӑҫ пайӗнчи лару-тӑру ҫинчен США Правительстви тӗрӗс мар хыпарсем илнӗ. Ку вӑл вӗтмен ҫӗртен пулнӑскер мар, мӗншӗн тесен, Эсир хӑвӑр пӗлтернӗ тӑрӑх, Хӗвелтухӑҫ Германири лару-тӑру ҫинчен калакан хыпарсене Америкӑн Германири Верховнӑй комиссарӗнчен тата Бонри канцлертан Аденауэртан илнӗ, вӗсем—Берлинӑн хӗвелтухӑҫ пайӗнче Эсир каланӑ пек обществӑлла йӗркелӗхе пӑснӑшӑн тӗп ответ тытмалли ҫынсем. Июнӗн 17-мӗшӗнче вӗсем Берлинӑн Америка секторӗнчен тара кӗрӗшнӗ ҫынсен тата уголовнӑй элементсен ушкӑнӗсене апат-ҫимӗҫ магазинӗсемпе ытти магазинсене вут тивертме, Демократиллӗ Германи Республикинчи учрежденисен ответлӑ работникӗсене тапӑнма тата ытти ирсӗр ӗҫсем тума ярассине организацилемен пулсан, вара Берлинра йӗркелӗхе пӑсни пачах пулмастчӗ.

Сирӗн ҫыруран ҫакӑ курӑнать: США Правительстви, кун пирки Демократиллӗ Германи Республикин Правительствинчен ыйтса пӗлмесӗрех, апат-ҫимӗҫ таварӗсем 15 миллион долларлӑх ярса парасси ҫинчен решени йышӑннӑ. Кун пек туни хальхи вӑхӑтра колонири халӑха та кӳрентернӗ пулӗччӗ, Германи халӑхне тата унӑн законлӑ демократиллӗ Правительствине кӳрентерни вара каламасӑрах паллӑ.

Кунта каланисенчен акӑ мӗн тухса тӑрать: ку хутра США Правительстви нимӗҫ халӑхне апат-ҫимӗҫ парса тӑрас тесе тӑрӑшни пӗртте курӑнмасть, вӑл пропагандистла маневр тума шут тытнӑ, ҫав маневр нимӗҫ халӑхӗн чӑн-чӑн интересӗсемшӗн тӑрӑшассипе нимӗн чухлӗ те ҫыхӑнса тӑмасть.

Эпӗ ҫак ҫырӑва ярса США Правительствине ҫапла пӗлтерме ыйтатӑп: Совет Союзӗ тата Демократиллӗ Германи Республики хушшинче туслӑ ҫирӗп ҫыхӑнусем пулнӑ май, Совет Правительстви халӑхӗнчен те Германи халӑхне апат-ҫимӗҫпе пулӑшнӑ. Совет Правительстви, кирлӗ пулсан, СССР тата Демократиллӗ Германи Правительствисем каласса татӑлнӑ тӑрӑх, малашне те Демократиллӗ Германи Республикинчи халӑха апат-ҫимӗҫ парса тата ытти енӗпе те пулӑшма хатӗр тӑрать.

Хисеплесе В. МОЛОТОВ».

Горняксен поселокӗ илемленет

КРИВОЙ РОГ, июлӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Л. М. Каганович ячӗпе тӑракан рудникра ӗҫлекенсем валли нумай хутлӑ ҫӗнӗ ҫуртсем лартнӑ. Паян ҫав ҫуртсене горняксен 70 ҫемйине яхӑн куҫнӑ. Ҫак кунсенче асӑннӑ ҫуртсемпе юнашар лартнӑ ҫуртсенчи тепӗр 102 хваттерте пурӑнма пуҫлаҫҫӗ.

Рудник патӗнчи поселокра ҫӗнӗ стройкӑсем курӑнаҫҫӗ. Кунта нумай хутлӑ темиҫе ҫурт лартаҫҫӗ. Вӗсен пурӑнмалли лаптӑкӗ 8 пин тӑваткал метр пулать. Ҫӗрлехи санатори, больница, ача сачӗ, ҫынсен йӑлисене тивӗҫтерес енӗпе ӗҫлекен комбинат, ҫӑкӑр завочӗ тӑваҫҫӗ. Урамсене асфальт сараҫҫӗ. Тротуарсем тӑрӑх тата килкартисенче тӗрлӗ йывӑҫсемпе улма-ҫырла йывӑҫҫисем пиншер тӗп лартнӑ, чечек лартмалли вырӑнсем тунӑ.

Л. М. Каганович ячӗпе тӑракан рудник патӗнче горняксем пурӑнакан поселока илемлетме кӑҫал 30 миллион тенке яхӑн расходлаҫҫӗ.

Апат-ҫимӗҫ туса кӑларасси ӳсет

ТАЛЛИН, июлӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Тартури консерв завочӗ паян кӑҫалхи ҫӗр ҫырлинчен варени пӗҫерме тытӑннӑ. Кӑҫал пӗлтӗрхинчен 18 процент ытларах варени хатӗрлеме палӑртнӑ.

Эстони ССР Ҫӑмӑл тата апат-ҫимӗҫ промышленность министерствин предприятийӗсем апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларассине ӳстереҫҫӗ. Ҫӑкӑрпа булка, пахча ҫимӗҫ консервисем тата ытти продуктсем кӑҫал, пӗлтӗр ҫак вӑхӑт тӗлне туса кӑларнипе танлаштарсан, чылай нумайрах туса хатӗрленӗ.

Тырӑ пуссинче

Колхозниксем наҫилкепе тӑпра ҫӗклесе вар урлӑ каҫакан ҫула тикӗслеҫҫӗ.

— Пӑрӑнӑр, машина килет!—кӑшкӑрчӗ вӗсенчен пӗри.

Колхозниксем, наҫилкисене лартмасӑрах, машина иртсе каясса кӗтме пуҫларӗҫ. Анчах «Победа» иртсе каймарӗ. Тӑпра купаланӑ ҫӗре ҫитеспе тӑпах тӑчӗ.

— Мӗншӗн чарӑнтӑр?—автомашинӑран тухсан ыйтрӗ Васильева.

— Ара, хамӑрӑн колхозӑн машини мар та, иртсе каять пулӗ терӗмӗр-ҫке,—ответлерӗҫ колхозниксем.

— Ҫула хӑҫан юсаса пӗтерме шутлатӑр?

— Каҫчен пӗтеретпӗр, Евлалия Ивановна,—терӗҫ те колхозниксем, ҫавӑнтах ҫул ҫине тӑпра ҫӗклеме пуҫларӗҫ.

Евлалия Ивановна Васильева—Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри агроном. Икӗ эрне Шупашкарта пулнӑ хыҫҫӑн, вӑл ӗнер колхоза таврӑннӑ. Таврӑннӑ кунах хире кайса тырпула пӑхса ҫаврӑнчӗ. Каҫхине парти пухӑвӗнче пулса тырпул пухса кӗртме хатӗрленес тӗлӗшпе ҫак кунсенче тумалли ӗҫсем ҫинчен тухса каларӗ. Унтах хирти комбайнсемпе ытти машинӑсене куҫарса ҫӳремелли ҫулсене юсасси ҫинчен те ыйту хускатрӗ.

Вӑл паян Чкаловски районӗнчи хӑйсемпе ӑмӑртса ӗҫлекен «Гвардеец» колхозри ӗҫсемпе паллашма шутларӗ. «Гвардеец» колхозри агроном Александр Ефимович Ефимов юлташ та Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри ӗҫсемпе паллашасшӑн пулнӑ. Анчах, Васильева юлташ командировкӑра пулнӑ пирки, унта кайматтаснӑ. Халӗ вӗсем «Гвардеец» автомашинипе тырпулсене пӑхса ҫаврӑннӑ хыҫҫӑн, тӳрех Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз ҫӗрӗ ҫине ӳкрӗҫ.

Малтан ҫул юсакансем патне чарӑнчӗҫ. Ку ҫул Васильева юлташа тахҫантанпах пӑшӑрхантарнӑ. Мӗншӗн тесен ӑна юсамасан ни комбайнсене куҫарса ҫӳреме, ни ҫапнӑ тырра колхозри автомашинӑсемпе турттарса тӑма ҫук. Государствӑна памалли тырра та, тӳрӗ ҫулпа илсе каяс вырӑнне, тавра ҫулпа турттармалла. Ҫул юсанӑ ҫӗрте ҫирӗм ҫын ытла тӑрӑшса ӗҫленине курсан, Евлалия Ивановнӑн чунӗ лӑпланчӗ. Вӑл текех ҫул тӑвакансене чӑрмантарса тӑрасшӑн пулмарӗ. Шофера малалла кайма хушрӗ.

Лаша пӗккинчен ҫӳлӗ ӳсекен ыраш пуссине кӗрсен автомашина каллех чарӑнчӗ. Икӗ агроном тырпулсене пӑхма пуҫларӗҫ.

Вӗсем чарӑннӑ вырӑнта тӑватӑ енче тӑватӑ тӗрлӗ тырпул ӳсет.

— Хӑшне малтан пӑхӑпӑр?—Ефимовран ыйтрӗ Васильева.

— Эпӗ—хӑна, эсир—хуҫа. Хӑвӑр пӗлнӗ пек кӑтартӑр,—кӑмӑллӑн кулса калать Ефимов.

— Апла тулӑран пуҫлӑпӑр эппин, —пуҫ кӑларичченех пилӗкрен ҫӳлӗ ӳснӗ тулӑ калчисене икӗ енелле сирсе асӑрханулӑн пусса шалалла кӗрет Васильева.

— Пӗртте таптаса ҫӗмӗрес килмест,— ун хыҫҫӑн утать Ефимов.

— Кунта тулӑ ҫине нумай ҫул ӳсекен курӑк та акнӑ,—лӑпчӑнса ларса тулӑ сулкӑнӗнчи люцернӑпа тимофеевка калчисем ӳснине пӑхма пуҫларӗ Васильева.—Сирӗн шутпа курӑк мӗнле аталаннӑ пек туйӑнать?—Ефимов шухӑшне пӗлесшӗн пулчӗ вӑл.

— Хӑвӑр мӗнле шутлатӑр?—ответлес вырӑнне хӑй ыйту панӑ хушӑра люцерна калчине татса илчӗ Ефимов.

— Чаплӑх мар та... Ҫавах, пурри ҫук мар ӗнтӗ.

— Ҫур аршӑна яхӑн ӳссен те чаплӑ мар пулать-и? Шутсӑр лайӑх. Тулӑ вырмалла пуличчен тата мӗн чухлӗ ӳсет-ха вӑл?

— Хӗлле выльӑхсем ҫисе киленмелле пултӑрччӗ.

Вӗсем тулӑ хушшинчен тухса ыраш пӑхма пуҫларӗҫ.

— Сирӗн тырра курсан чун савӑнать,—терӗ шит тӑршшӗ ыраш пучахӗ ҫине ӑшшӑн пӑхакан Ефимов.—Гектартан ҫирӗм центнер кая мар тухасса кӗтсех тӑр. Искусственнӑй майпа шӑркалантарнӑ-и?

— Шӑркалантарнӑ... Сирӗн ыраш пирӗннинчен вӑйлӑрах. Вӑтӑр центнертан кая мар тухать. Пирӗн сайрарах, ҫирӗм те тухаймӗ.

Ку сӑмахсене Евлалия Ивановна Ефимовӑн кӑмӑлне тупас тесе каларӗ.

— Пирӗн колхозӑн ҫуртырисем пирки мӗн шутлатӑр?—кӑмӑллӑн кулса ыйтать Ефимов.

— Ун ҫинчен кӗркуннесӗр калаймастӑп, Александр Ефимович,—тӳрӗ ответ парассинчен пӑрӑнчӗ Васильева.

«Гвардеец» колхозӑн ыраш, чӑнах та, калама ҫук вӑйлӑ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозӑн вара, ҫуркунне лап-лап ҫӗрнӗ пирки, чылай пӗтнӗ. Халӗ вӑйлӑ ӳсекен вырӑнта та кӑшт сайрарах. Ҫуртырисем вара «Гвардеец» колхозӑннинчен вӑйлӑрах аталанаҫҫӗ. Евлалия Ивановна хӑйсен ҫуртыррийӗпе мухтанасшӑн пулмарӗ. Ҫавӑнпа вӑл Александр Ефимовичӑн ыйтӑвне кӗркуннене хӑварчӗ.

Ефимов тинӗс пек хумханса ларакан тулӑ пусси еннелле ҫаврӑнса тӑчӗ.

— Халиччен эпӗ сирӗн колхозӑнни пек вӑйлӑ тулӑ курман. Пирӗн те лайӑх. Сирӗн тата вӑйлӑрах. Ҫумланӑ-и?

— Ҫумламан.

— Да, пирӗн колхозсен хирӗ ҫумкурӑкӗнчен тасалчӗ ӗнтӗ. Ытти колхозсене те сӗрӗҫ культурине ӳстерсе ҫумкурӑкӗнчен тасалма пулӑшасчӗ...

Хуллен кӑна каласса утнӑ май вӗсем тепӗр пусӑ патне пырса тӑчӗҫ.

— Ку мӗнле каюллӑ ыраш вара сирӗн?—ыйтрӗ Ефимов.

— Ҫулса выльӑхсене ҫитермелли, — ӑнлантарчӗ Васильева.—Ҫулса ҫитерсе пӗтерейменнинчен силос хыватпӑр.

— Мӗншӗн каюллӑ-ха вӑл, ҫавна калӑр эсир,—Васильева отвечӗ ниепле те ҫырлахтараймарӗ Ефимова.

— Ҫуркунне сӗлӗ акнӑран.

Ҫуркунне ыраш калчи сайрарах пек курӑннӑ. Ҫавӑнпа Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра ыраш калчи ҫине сӗлӗ акнӑ. Кайран ыраш калчи ҫӑраланнӑ. Ҫавах ырашпа пӗрле сӗлӗ те ӳснӗ. Халӗ ыраша ҫулса ҫитереҫҫӗ. Сулнӑ вырӑнта сӗлӗ калчи ешӗрсе ҫӗкленет. Ӑна каллех ҫулса выльӑхсене ҫитермелле пулать. Ҫапла вара пӗр вырӑнтах ҫулса ҫитермелли апат икӗ хут туса илеҫҫӗ.

— Аван меслет,—Васильева выльӑх апатне нумайлатмалли аслӑ меслет шутласа тупнӑшӑн савӑнчӗ Ефимов.—Ку меслетпе кирек камӑн та усӑ курмалла, — хушса хучӗ вӑл пӑртак шухӑшласа тӑрсан.

Ҫулса ҫитермелли ырашпа юнашар вӑрлӑха хӑвармалли утмӑл пилӗк гектар люцерна ӳсет. Унтах хутран-ситрен кушак хӳри пек тимофеевка пучахӗсем курӑнкаласа лараҫҫӗ.

— Лайӑх ӳсет,—ҫӗр ҫине тӑсӑлса ӳкнӗ люцернӑна ҫӗклесе пӑхрӗ Ефимов.

— Питӗ начар-ха, Александр Ефимович, питӗ начар. Хӑвӑртрах ҫумкуракӗсенчен тасатса гексохлоран сапмалла. Унсӑрӑн тухӑҫлӑ вӑрлӑх туса илеймеспӗр. Анчах «Сельхозснабжениран» йӑлӑнса ыйтсан та хурт-кӑпшанкӑсене пӗтермелли эмелсем илме ҫук,—пӑшӑрханса каларӗ Евлалия Ивановна.

— «Сельхозснабжени» чӑнах та начар ӗҫлет ӗнтӗ. Машинӑсем валли запаслӑ пайсем те кӳрсе килмеҫҫӗ... Тырпула миҫе кунта вырса пӗтерме шутлатӑр? — сӑмах май пекрех ыйтрӗ Ефимов.

— Ыраша ҫичӗ кунтан мала ярас марччӗ. МТС темшӗн пире кӑҫал икӗ комбайн кӑна парасшӑн. Халӗ эпир виҫӗ колхоз пӗрлешсе пысӑкланнӑ. Шадт аптӑрамалла МТС-ри юлташсемпе. Пӗрлешиччен те икӗ комбайн панӑ пире, халӗ те иккӗ кӑна параҫҫӗ.

— Тутӑ тырӑ час тӑкӑннине хисепе илмен пулас...

— Кӑҫал эпир утмӑл гектар кантӑр акрӑмӑр. Ӑна пуҫтарса кӗме мӗн чухлӗ ҫын кирлӗ? Тӑватӑ комбайн памасан тырпула тӑккаламасӑр пуҫтарса кӗртме питӗ хӗн пулать. Халӗ те ӗҫе вӑй ҫитнӗ таран механизацилеме тӑрӑшатпӑр ӗнтӗ...

— Эсир итеме механизацилеме тытӑннӑ теҫҫӗ. Ҫавна курма пулать-и?—Васильева сӑмахне пӳлнӗ пекех ыйтрӗ Ефимов.

Автомашина колхоз итемне пырса чарӑнчӗ. Ефимов кашни япалапа тимлӗн паллашма пуҫларӗ.

— Ку, акӑ, улӑм улӑхтармалли элеватор. Кунта тӗрлӗрен сортировкӑсем лартса тырӑ тасатмалла тӑватпӑр. Кун пек тасатсан тырпула итемренех кондицие лартса кӗртме пулать,—ӑнлантарать Евлалия Ивановна.—Ытти механизмсене кабель ҫитмен пирки вырнаҫтарса лартаймарӑмӑрха. Ыран Тутар республикинчи колхоза кайса вӗсен механизациленӗ итемӗпе паллашасшӑн-ха...

— Ыран кайса килӗр эппин. Тепӗр кунне эпир сирӗн пата ӑмӑрту договорне, мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслеме килетпӗр. Ун чухне сирӗн ӗҫӗрпе тата тӗплӗнрех паллашӑпӑр,— каяс умӗн алӑ пачӗ Ефимов.

Автомашина «Гвардеец» колхоз еннелле вӗҫтерчӗ. Евлалия Ивановна ҫӗнӗ тыра тиветме хатӗрлесе ҫитерне сушилкӑна тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн тимӗрҫӗ лаҫҫи еннелле утрӗ.

— Сывлӑх пултӑр Портнов юлташ, — сывлӑх сунчӗ вӑл тимӗрҫе.—Ӗҫсем мӗнлерех пыраҫҫӗ?

— Тавтапуҫ. Жнейкӑсене юсаса пӗтертӗмӗр, темелле. Ултӑ молотилкӑран тӑваттӑшне паянах итеме лартса авӑн ҫапма пулать,—ответлерӗ Портнов.

— Вӑхӑт ҫывхарса ҫитрӗ, васкас пулать. Молотилкӑсене юсаса пӗтерсен пӗри вӗсене ӗҫлеттермелли электромоторсене юсама тытӑнӑр. Тепри комбайн пӑрахса пыракан улӑма пуҫтармалли волокуша тума пуҫлӗ,—тимӗрҫӗсене малашне тумалли ӗҫсемпе паллаштарать агроном.

— Хамӑр та ҫапла шухӑшлаттӑмӑр ҫав.

Агроном, бригадирсене наряд панӑ ҫӗре ӗлкӗрес тесе, васкаса колхоз правленине кайрӗ.

Хӗвел кас еннелле сулӑнчӗ. Анчах тимӗрҫӗ лаҫҫинче мӑлатук сасси илтӗнме чарӑнмарӗ.

П. ЩИПЦОВ.

Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз, Елчӗк районӗ.

Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче

Чăваш республикинчи финанс органĕсем 1953 çулхи иккĕмĕш кварталти финанс планне тултарассишĕн ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен

Чăваш республикинчи финанс органĕсем 1953 çулхи иккĕмĕш кварталти финанс планне тултарассишĕн ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен Чăваш АССР Финанс министерствипе финанспа банк работникĕсен профсоюзĕн обкомĕ тăратнă материалсене пăхса тухса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Чăваш республикинчи финанс органĕсем хушшинчи 1953 çулхи иккĕмĕш кварталта пынă социализмла ăмăртура Красноармейски районĕнчи финанс пайĕ малта тухнине палăртнă (райисполком председателĕ Г. Федоров юлташ, районти финанс пайĕн заведующийĕ А. Емельянов юлташ). Çак районти финанс пайĕ халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана налогсем енĕпе 119 процент, вăл шутра ялхуçалăх налогĕ енĕпе 120,8 процент, государство страхованийĕ енĕпе 125,3 процент, государство тупăшĕсем енĕпе 104,8 процент тултарнă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата пĕрремĕш премине 5.000 тенкĕ Красноармейски районĕнчи финанс пайне памалла тунă.

2. Чăваш АССР финанс органĕсем хушшинчи социализмла ăмăртура Канаш районĕнчи финанс пайĕ иккĕмĕш вырăна тухнине палăртнă (райисполком председателĕ И. Соловьев юлташ, районти финанс пайĕн заведующийĕ П. Петров юлташ). Çак районти финанс пайĕ халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана налогсем енĕпе 112,6 процент, вăл шутра ялхуçалăх налогсем енĕпе 111,4 процент, государство страхованийĕ енĕпе 164,4 процент, государство тупăшĕсем енĕпе 107,2 процент тултарнă.

Канаш районĕнчи финанс пайне иккĕмĕш премине 4.000 тенкĕ памалла тунă.

3. Чăваш республикинчи финанс органĕсем хушшинчи социализмла ăмăртура Первомайски районĕнчи финанс пайĕ виççĕмĕш вырăна тухнине палăртнă (райисполком председателĕ Г. Савинов юлташ, районти финанс пайĕн заведующийĕ Ф. Макаров юлташ). Çак районти финанс пайĕ халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана налогсем енĕпе 104,9 процент, вăл шутра ялхуçалăх налогĕ енĕпе 102 процент, государство страхованийĕ енĕпе 126,4 процент, государство тупăшĕсем енĕпе 101,7 процент тултарнă.

Первомайски районĕнчи финанс пайне виççĕмĕш премине 2.000 тенкĕ памалла тунă.

4. 1953 çулхи иккĕмĕш кварталти финанс планне тултарас тĕлĕшпе Тăвайпа Çурачăк районĕсенчи тата Канаш хулинчи финанс пайĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

5. 1953 çулхи иккĕмĕш кварталти финанс планне тултарас тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр, Пăрачкав, Октябрьски, Куславкка тата Çĕмĕрле районĕсенчи финанс пайĕсем çителĕксĕр ĕçленине палăртнă. Вĕсем халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана налогсем енĕпе 52—79 процент çеç тултарнă.

Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр, Пăрачкав, Октябрьски, Куславкка тата Çĕмĕрле райисполкомĕсен председателĕсене финанспа бюджет ĕçне лайăхлатма, 1953 çулхи виççĕмĕш кварталти финанс планне тултармалла тума хушнă.

Хаçатсем çинчен вулакансем мĕн калаççĕ

Хаçатăн идейăллă шайне ÿстермелле

Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçат 1935 çултанпа тухса тăрать. Çавăнтанпа вăл ăна тăтăшах вуласа пыратăп. Калас пулать: хаçатăн пахалăхĕ çултан-çул ÿсет. КПСС XIX-мĕш съезчĕ хыççăн унăн ĕçĕ уйрăмах лайăхланса пыни сисĕнет. Районта идеологилле ĕç, хуçалăхпа культура строительстви мĕнле пыни çинчен вăл ĕççынниcене тăтăшах пĕлтерсе тăрать, партин XIX-мĕш съезчĕ совет халăхĕ умне кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама ĕççыннисене мобилизацилет.

Тĕслĕхшĕн эпĕ кăçалхи июнĕн 18-мĕшĕнче тухнă номере илсе пăхасшăн. Ку номерте культура строительстви ыйтăвĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Хаçатăн «Çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçе вăйлатмалла» ятлă умстатьине вуласан, эпир 1953—54 çулхи çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе умра тăракан задачăсемпе паллашатпăр.

Районти шкулсенче çĕнĕ вĕренÿ çулне тивĕçлипе хатĕрленме пуçăнман-ха. Кив Эйпеçри, Аслă Чемени шкулсемсĕр пуçне ытти шкулсем валли кăçал нимĕн чухлĕ те вутă хатĕрлемен. Нумай шкулсене юсама, оборудование çĕнетме материалсем çитмеççĕ. Райпо правленийĕ пăта, чÿрече кантăкĕ тата ытти кирлĕ япаласене вăхăтра кÿрсе килме тăрăшмасть. Çĕньялти çичĕ çул вĕренмелли шкул çуртне юсас ĕç материалсем çуккипе пула питĕ вăраххăн пырать. Ял Совет председателĕ Езюков тата колхоз председателĕ Семенов юлташсем шкул çуртне юсама материалсем вăхăтра кÿрсе пама тăрăшмаççĕ.

Хаçатăн умстатьи—çивĕч те витĕмлĕ. Вăл çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене тивĕçлипе критиклет.

Савăн пекех хаçат ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕпе тăтăшах паллаштарать. «Путь коммунизма» колхозри М. Васильева доярка хăй çумне çирĕплетнĕ ĕнесенчен çултан-çул сĕт нумай суса илет. 1952 çулта кашни ĕнерен 1.385-шер литр сĕт суса илнĕ. 1953 çулта вăл кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.800 литртан кая мар сĕт суса илме пулнă.

«Республикăри чи лайăх птичница» ятне илессишĕн» ятлă статьяра «Новая сила» колхозри М. Родионовăпа А. Трофимова птичницăсем инкубатор станцийĕнчен илсе килнĕ чĕпсене лайăх пăхса ÿстерни, чăх-чĕпсене зоотехника науки вĕрентнĕ пек пăхни çинчен каласа параççĕ.

М. Ягунов юлташ Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри сысна фермин çитĕнĕвĕсемпе паллаштарать. Вăл ферма заведующийĕ пулса 9-мĕш çул ĕçлет. Иртнĕ çул кашни сысна аминчен 11 çура илсе ÿстернĕ. Фермăра ĕçлекенсем, социализмла ăмăртăва хутшăнса, кăçал кашни сысна аминчен 14-шар çура илсе ÿстерме сăмах pană.

«Пионер» колхозри ĕне ферми заведующийĕ А. Козлов юлташ А. Камышова колхозница çамрăк пăрусене пăхнă çĕрте ырми-канми ĕçлени çинчен çырать.

«Коммунар» хаçатра малта пыракансен опычĕпе паллаштаракан материалсем татах та пур. «Красная Поляна» колхоз председателĕ П. Степанов юлташ кăçал вăйлă тырпулшăн мĕнле кĕрешни çинчен каласа парать. МТС-ăн главнăй агрономĕ Ф. Сергеев юлташ Ф. Селиверстов ертсе пыракан трактор бригадин паха ĕçĕсем çинчен çырать.

«Коммунар» хаçат, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне тăтăшах сутатса, ырă та пархатарлă ĕç тăвать, районти ĕççыннисене партин XIX-мĕш съезчĕ социализмла ялхуçалăхĕ умне кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама мобилизацилет.

Хаçат страницисен пысăк пайне идеологилле ĕçĕн ыйтăвĕсем йышăнаççĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене, И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенине вĕренес ыйтупа пичетленекен статьясене час-часах вулатпăр.

«Коммунар» хаçат ĕçĕнче çитменлĕхсем те чылай-ха. Хаçатра пичетленекен чылай статьясен пахалăхĕ, вĕсен идейăллă шайĕ çителĕклĕ мар. Хаçатăн пĕр номерĕнче П. Сенин çырнă «Шурă хурăн» ятлă сăвă пичетленсе тухрĕ. Çав сăвă вулакансен кăмăлне каймарĕ, унăн идеи пачах юрăхсăрри курăнчĕ.

Хаçат критикăпа самокритикăна çарма пулăшас енĕпе çителĕксĕр ĕçлет-ха. Вăл районти организацисемпе учрежденисенчи çитменлĕхсене хăюсăр критиклет.

Районти магазинсенче, столовăйра çитменлĕхсем нумай. Çав çитменлĕхсене пĕтерессишĕн хаçат çителĕксĕр кĕрешет.

Стена хаçачĕсене ĕçре кулленхи пулăшса пырасси районти хаçатăн тĕп задачисенчен пĕри пулмалла. Анчах «Коммунар» хаçат ку енĕпе те начар ĕçлет-ха. Вăхăтран вăхăта пулса иртекен редакторсен канашлăвĕсем сахал йышлă пулаççĕ, пĕр-пĕрин ĕç опычĕпе паллаштарма стена хаçачĕсен выставкисене йĕркелемеççĕ.

Коммунизмла общество тăвас ĕçĕн задачисем хаçатсен ĕçне çĕнĕ пусăма хăпартма хушаççĕ. «Коммунар» хаçат редакцийĕн çав задачăсене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

В. АНТОНОВ,
Çĕньялти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентÿ пайĕн заведующийĕ, Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Муркаш МТС-ĕнчи комбайнерсем. Сулахайран сылтăмалла—Г. Музыкантов, В. Анисов тата В. Неволин юлташсем. Вĕсен комбайнĕсене МТС-ра чи малтан тырă вырма хатĕрлесе çитернĕ.

А. КОСТИН фотоÿкерчĕкĕ.

Медицина енĕпе пулăшу парас ĕçе лайăхлатар

Совет Союзĕн Коммунистсен партийĕпе правительство пирĕн халăхăн пурнăçне, ĕç условийĕсене лайăхлатассишĕн тата ĕççыннисен сывлăхне сыхлассишĕн яланах хытă тăрăшаççĕ. Совет халăхĕн пурнăçĕ куллен-кун лайăхланса пырать, культури ÿсет. Çакă вăл халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсем те вăйлăн аталаннинчен килет. Промышленность ялхуçалăхне çĕнĕ машинăсем нумай парса тăрать. Колхозсене пĕрлештерсе пысăклатни социализмла уй-хирте тырпул тухăçлăхне ÿстерме пулăшрĕ, колхозниксене çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарчĕ.

Пирĕн республикăри колхозсенче вăйлă тырпул çитĕнет. Ăна васкавлăн тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртмелли вăхăт та çывхарса килет. Çакă вара уй-хирте, итем çинче ĕçлекенсене медицина пулăшăвĕ парас ĕçе халех организацилеме хушать. Медицина работникĕсен нумай йышлă çарĕн тĕп задачи вăл хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче колхоз ĕçченĕсене тата ялхуçалăх механизаторĕсене вăхăтра тата кирлĕ пулăшу парса тăрасси пулать. Çак ĕçе лайăх организацилени ялхуçалăх производствинче ĕç тухăçлăхне хăпартма пулăшĕ.

Тĕнчере чи малти вырăнта тăракан совет медицини халăха пулăшу парас ĕçе кулленех вăйлатса пырать, çак ĕçе татах та лайăхрах йĕркелеме çĕнĕ майсем шырать. Ялти çынсене тĕрĕс пулăшу памалли чи лайăх майсенчен пĕри вăл — мĕнпур çынсен сывлăхне тĕрĕслесе, кам мĕнпе чирлине палăртасси, чирлисене кĕскe вăхăтрах сыватма тăрăшасси, çынсене вĕсен сывлăхне кура ĕç тупса парасси пулать. Çакна активлă диспансеризаци меслечĕ, теççĕ.

Нумай районсенчи медицина работникĕсем çынсен сывлăхне диспансерла меслетпе сăнаса тăма тата чирсенчен сыватма хĕллехи уйăхсенчех пуçларĕç те уй-хир ĕçĕсем пуçланнă çĕре пысăк çитĕнÿсем турĕç. Куславкка районĕнчи Сала больницинчи специалистсем çавăн пек майпа 3.600 çынна, Сĕнтĕрвăрри врачĕсем 3.000 çынна, Çĕрпÿ врачĕсем 2.300 çынна тĕрĕсленĕ.

Çынсен сывлăхне активлă диспансеризаци йĕркипе сăнаса тăни, паллах, çынсен сывлăхне упрама, вĕсене производствăра ĕç тухăçлăхне ÿстерме нумай пулăшать. Анчах, апла пулин те, республикăри чылай районсенче (Тăвай, Елчĕк, Калинино, Вăрнар, Красноармейски, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай т. ыт. те) ку ĕçе халиччен те йĕркелемен-ха.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра ял ĕçченĕсене медицина пулăшăвĕ парас ĕçе рычăлăн пурнăçласси ялта медицина работникĕсем çителĕклĕ пулнинчен нумай килет. Çавăнпа та хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче медицина работникĕсем çителĕксĕр ялсене районти сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсенчи работниксене ярас пулать.

Ĕç вăхăтĕнче ăнсăртран суранланнисене тата чирленисене вăхăтра пулăшас тата ун пек пуласинчен малтанах сыхланас тесен, ялти медицина учрежденийĕсенче медикаментсем, сыхмалли материалсем, столбнякран сыхланмалли сыворотка, дезинфекци тумалли эмелсем, медицина аппаратури яланах хатĕр тата çителĕклĕ пулмалла. Ялсенчи медицина пункчĕсем урлă санитарипе гигиена япалисем, эмелсем, индивидуальнăй пакетсем сутассине йĕркелемелле. Колхоз правленийĕсен кашни бригадăнах пĕрремĕш пулăшу аптечкисем илсе памалла. Уйри ĕç вăхăтĕнчех пĕрремĕш пулăшу парас ĕçе Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çуруйăх обществин членĕсене активлă хутшăнтармалла.

Ялти ĕçченсем уй-хирте тата итем çинче ĕçленĕ вăхăтра участоксенчи медицина учрежденийĕсенче суранланнисемпе чирлисене ирхине тата каçхине йышăнмалли йĕрке тумалла.

Республикăри сывлăх министерствипе район центрĕсенчи больницăсен специалисчĕсем ялти медицина работникĕсене пулăшма вырăнсене ытларах тухса çÿреме тивĕçлĕ.

Врачсен, фельдшерсен, акушеркăсен тата медицина сестрисен колхозсенче вăхăтлăха уçнă ача яслисене асăрхаса тăрас пулать. Вĕсен яслĕсенче ĕçлеме уйăрнă колхозницăсене вĕрентсе хатĕрлемелле, ясли валли уйăрса панă çурт тата ун таврашĕнчи çĕр санитари тĕлĕшĕнчен юрăхлипе юрăхлă маррине тĕрĕслемелле. Яслĕне çÿремелли ачасен сывлăхне тĕрĕслесе тухас пулать, малалла вара вĕсене мĕнле воспитани панине, мĕнле апат-çимĕç çитернине асăрхаса тăмалла, тĕрлĕ чир-чĕрсенчен сыхламалла.

Вар-хырăм чирĕсем ан пуçланса кайччăр тесен, районти санитарипе эпидемиологи станцийĕн работникĕсем çăлкуçĕсене, ĕне фермисене, ĕç вăхăтĕнче мĕнпур колхозниксем валли пĕçернĕ апат-çимĕçсен тасалăхĕпе пахалăхне тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Республикăри Санпросвет çурчĕпе районсенчи санитарипе эпидемиологи станцийĕсен колхозсем тăрăх куçса çÿрекен выставкăсем организацилемелле, медицина ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе каласусем иртермелле.

Çак асăннă ĕçсене тума медицина работникĕсене районсенчи Советсемпе ял Совечĕсен исполкомĕсен пулăшас пулать. Вĕсен медицина пункчĕсене тĕрлĕ эмелсем туянма укçа-тенкĕ парса пулăшмалла, колхозсен вара чирлĕ çынсене кирлĕ çĕре ăсатма лав тупса памалла е машинăпа ăсатмалла. Ачасем валли вăхăтлăх яслĕсем уçмалла.

В. СЕРГЕЕВ,
Чăваш АССР Сывлăх министрĕн заместителĕ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Канаш районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса ĕçлени, фермăри сыснасене йÿнĕ хакпа нумай сутни, колхоз руководителĕсем хăйсем те. йÿнĕ хакпа темиçешер сысна сутăн илни çинчен çыру килнĕччĕ. Редакци ку çырăва КПСС райкомне янăччĕ.

КПСС Канаш райкомĕ çырăва райком бюровĕн ларăвĕнче сÿтсе явни, çырури фактсем тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. Жданов ячĕпе тăракан колхозри сысна ферми заведующийĕ Киселев фермăран 16 сысна сутса тата ытти ултавлă майсемпе 1.074 тенкĕ хăй çумне чикнĕ, кунсăр пуçне йÿнĕ хакпа 2 çура илнĕ. Йÿнĕ хакпа колхоз ферминчен колхоз председателĕ Суранов 4 çура, колхоз бухгалтерĕ Зайцев 2 çура илнĕ.

Фермăри ĕçе тивĕçлипе организацилеменнине пула Киселев заведующи пулнă вăхăтра сыснасем чирлесе вилни те пулнă.

КПСС райкомĕн бюровĕ Киселева тивĕçлипе ответ тыттарма йышăннă. Колхоз ферминчен 45 сысна йÿнĕ хакпа сутнăшăн, хăй валли 2 сысна илнĕшĕн тата колхоз укçине 1.074 тенкĕ хăй çумне чикнĕшĕн бюро Киселева партирен кăларма йышăннă, колхозниксем ăна ферма заведующийĕн ĕçĕнчен хăтарнă. Ĕçре тимсĕр пулнăшăн, фермăри сыснасене йÿнĕ хакпа нумай суттарнăшăн тата хăй валли 4 сысна çури йÿнĕ хакпа илнĕшĕн колхоз председательне Суранова хытă ятланă. Çавăн пекех ăна сутăн илнĕ сыснасемшĕн тивĕçлĕ укçана колхоза тÿлеме, йÿне илнĕ сыснасемшĕн ытти çынсенчен те укçа шыраса илме хушнă.

Ферма хĕрĕсем

Вера Краснова ĕне ферми çурчĕ умĕнчи сак çинче ларать. Вăл паян — дежурнăй.

Фермăри хуралçă—Хветĕр мучи ферма йĕри-тавра пăхса çаврăнса Верук патне пычĕ.

— Телейлĕ пурнăçпа пурăнаççĕ çав пирĕн çамрăксем,—терĕ вăл ялтан килекенсен хавасла юрă-кĕвĕсене итленĕ май. — Ĕçлеççĕ, вĕренеççĕ, савăнаççĕ. Верук, хĕрĕм, самантлăха çаврăнса кил, кунта пурте йĕркеллĕ-ха. ĕнесем выртнă, çит тутлăн кавлесе выртаççĕ.

— Каймастăп ĕнтĕ, часах хĕрсем те урамран кĕрессĕ акă...

Верук иртнĕ кунсене аса илет.

Ун чухне колхозри парторганизацин уçă пухăвĕ фермăсенче выльăх-чĕрлĕхе хĕлле мĕнле пăхса усрани çинчен сÿтсе яврĕ. Пуху хĕрÿллĕ иртрĕ. Малтан ферма заведующийĕсемпе колхоз председателĕн отчечĕсене итлерĕç, унтан каласу пуçланчĕ. Колхозниксем — шур сухаллă старик сем те, колхоз ĕçне тин хутшăнма пуçланă çамрăксем те выльăх апатне расходлас, выльăхсене пăхса усрас ĕçре çитменлĕхсем пурри çинчен, çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсем çинчен каларĕç.

Çав пухура Верук та тухса каларĕ.

— Ĕçне кура тупăшĕ, тет халăх,—пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне.—Сĕт нумай паракан ĕнесем хăйсем тĕллĕн пулмаççĕ, вĕсене хамăрăн пăхса çитĕнтермелле. Анчах колхоза ертсе пыракансем çавăн çинчен шухăшламаççĕ.

«Питĕ тĕрĕс калать»,— илтĕнчĕ кайра ларакансем хушшинче пăшăлтатнă сасă.

Верук чăнах та витĕмлĕ сăмахсемпе каларĕ. Правлени ларăвĕнче ферма ĕçĕсем çинчен сайра хутра çеç сÿтсе явни çинчен, йышăннă решенисем хут çинче анчах тăрса юлни, вĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеменни çинчен каларĕ Верук.

Пухуран киле таврăнсан, Верукăн çывăрас килмерĕ. Вăл шкафран пысăках мар кĕнеке илсе, ăна вулама тытăнчĕ. Кĕнеке—«Ф. В. Матюхина дояркăн ĕçри опычĕ» ятлă. Кĕнеке Калининград облаçĕнчи Приморски районти «Победа» колхозри дояркăсен ĕçри паха опычĕпе паллаштарать.

* * *

Парторганизацин уçă пухăвĕ пулса иртнĕ хыççăн колхоз пурнăçĕнче паллăр малла улшăнусемех пулчĕç. Колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци колхозниксем хушшинче агитацилле-массăлла ĕçе сарса ячĕç.

Халĕ социализмла ăмăрту колхозниксен йăлине кĕчĕ. Каярах юлнисем чи малтисене хуса çитме тăрăшаççĕ. Юлакансене малтисем пулăшса пыраççĕ.

Ĕне фермине ĕçлекенсем хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç. Колхозри хастарлă дояркăсем çинчен районта ырă хыпар сарăлчĕ. Дояркăсем пурте зоотехника курсĕнче вĕренсе хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстернĕ.

Паян фермăна кÿршĕри Дзержинский ячĕпе тăракан колхозри ферма работникĕсем килсе кайрĕç. Фермăри ĕçсемпе паллашрĕç. Кунашкал хăнасем ĕне фермине час-часах пулаççĕ.

— Пурнăçра йăли çавăн пек: пĕр-пĕринчен вĕренмелле, лайăххипе ыттисене паллаштармалла. Эсир пирĕн пата килĕр, эпир сирĕн пата пыратпăр. Ун чух вара пирĕн ĕç тата лайăхрах пулĕ, сирĕн ĕç те лайăхланĕ,— теççĕ ĕне фермине ĕçченсем.

Кун йĕркинче кăтартнă тăрăх, ирхине 5 сехетре пирĕн фермăра хĕрÿллĕ ĕç пуçланать. Çак вăхăтра ĕнесене сума тытăнаççĕ, ултă сехет çитсен апат параççĕ, çичĕ сехетре ĕнесене шăвараççĕ, витесене тасатаççĕ. Унтан икĕ сехет хушши ĕнесене уçă сывлăшра çÿретеççĕ. 11 сехетре ĕнесене иккĕмĕш хут сума тытăнаççĕ, виççĕмĕш хутне вара каçхине 6 сехетре сăваççĕ. Ĕнесене кунне виçĕ хутчен апат параççĕ, виç хут шăвараççĕ. Тăрантармалли рациона ĕнесен йывăрăшне тата вăл çав апата çисе мĕн чухлĕ сĕт пама пултарнине кура тăваççĕ.

— Фермăра ĕçлекенсем хăйсен ĕçне чун-чĕререн юратаççĕ,— тет Вера Краснова.—Фермăри ĕçсене пурне те зоотехник хатĕрленĕ расписани тăрăх туса пыратпăр. Çапла туни выльăх-чĕрлĕх сывлăхне çирĕплетме пулăшать. Бригада выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлесе хăварма тăрăшать. Пуринчен ытла силос нумай хатĕрлетпĕр. Ĕне выльăхсемшĕн вăл уйрăммăнах усăллă, силосра витаминсем нумай сыхланса юлаççĕ. Силос хывма ятарласа акнă культурăсене кăна мар, çырма-çатрасенчи курăксене те çулаççĕ, çĕрулми аврипе пахча çимĕç курăкĕсемпе те усă кураççĕ...

Колхозниксене лайăх ĕçлеме хавхалантаракан майсенчен пĕри вăл — ĕçшĕн хушса тÿлесси. Колхозра çак йĕрке тивĕçлипе пурнăçланса пырать. Иртнĕ çулта Вера Краснова ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх пăру тата сĕт нумай илчĕ. Ытти работниксене те ĕçшĕн хушса тÿленĕ.

Хăнасем фермăри ĕçсемпе кăмăллă пулчĕç, вĕсен опычĕпе хăйсен колхозĕнче усă курма сăмах пачĕç.

Вера Краснова иртнĕ çулта хăй пăхакан кашни ĕнерен 1.947-шер литр сĕт суса илнĕ. Кăçал вăл кашни ĕнерен 2.000 литртан кая мар сĕт суса илме сăмах панă. Июль уйăхĕ тĕлне «Федосия» ĕне 1.375 литр, «Сорока» ĕне—1.333 литр, «Ласточка» ĕне 1.305 литр сĕт панă.

Красновăпа ăмăртса ĕçлекен Галина Данилова та иртнĕ çулта кашни ĕнерен 1.900 литр ытла сĕт суса илнĕ. Кăçал та вăл хăйĕн ĕçĕнче Красновăран юлмасть.

Пилĕк сехет çитесси 15 минут. Дояркăсем сак çине юнашар пырса ларнă та кун йĕркинче кăтартнă ĕнесене сумалли вăхăта кĕтеççĕ.

Пилĕк сехет çитсен фермăра хĕрÿллĕ ĕç пуçланчĕ. Ферма заведующийĕ шкафран ĕнесенчен мĕн чухлĕ сĕт суса илнине çырса пыракан журнала илсе хĕрлĕ скатертьпе витнĕ сĕтел хушшинче кĕрсе ларчĕ. Сĕт виçи витрине хăй умне илсе лартрĕ.

Дояркăсем пĕрин хыççăн тепри сутă витресемпе сунă сĕт илсе килеççĕ. Верук та хăй пăхакан ĕнесене суса пĕтерчĕ. Сунă хыççăн ĕне сиплисене вазелинпа сĕрчĕ.

Верук улттăмĕш çул ĕнтĕ фермăра доярка пулса ĕçлет. Районта ун ятне пĕлмен çын та çук. Ултă çул хушшинче вăл пăхакан ĕнесем пĕри те чирлемен, пĕр ĕни те хĕсĕр юлман, кашниех тĕреклĕ, сывă пăрусем туса панă.

Правлени ĕнесен сĕт тухăçлăхне ÿстерме кирлĕ условисене пурне те туса пама тăрăшать. Кунта сăвакан ĕнесене уйрăм тăрантарассине йĕркеленĕ, вĕсем валли ятарласа курăксем нумай акнă. Ĕнесене çÿретмелли пĕтĕм уя сакăр пая уйăрнă. Кашни пайĕнче виçшер кун кĕтеççĕ, вара малтан çитернĕ вырăна тепĕр виç эрнерен тин пырса кĕреççĕ. Унччен курăк лайăх ÿссе çитĕнет.

...Кĕçĕн Пăла шывĕ енчен çиле май трактор сасси илтĕнет. Унта, Пăла тăрăхĕнчи лапамра, А. Смирнов комсомолец анлă ретпе акнă кăшман речĕсем хушшипе трактора кăпкалатать. Çак ĕçе унăн кĕнтăр апачĕ тĕлне пĕтерсе клевер сулма тытăнмалла.

Хĕрсем, трактор шавне итленĕ май, сăмах пуçараççĕ.

— Клевера чечеке ларичченех сулса пуçтаратпăр. Пĕрремĕш хут сулнинчен силос тăватпăр,—теççĕ вĕсем.

Тÿсекленчи «Трактор» колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисене лайăх хĕвеланăç енне, сĕртлĕ вырăна вырнаçтарнă. Колхозра выльăхсене хĕл каçарма лайăх условисем туса параççĕ. Кăçал те кунта строительствăна ĕçсемпе пĕрлех пуçланчĕ. Платникĕсен бригадине хастарлă комсомолец А. Иванов юлташ ертсе пырать.

Пĕлтĕр колхоз государствăна сĕт памалли заданине срокчен пурнăçланă, колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх сĕт нумай валеçсе панă. Кашни ĕçкунне [illegible] колхозниксем 150—200-шер литр сĕт илнĕ.

Хĕвел анчĕ. Ĕнесем картара, пăрусем витере. Ĕнесене юлашки хут суса кĕнĕ хыççăн ĕç кунĕ вĕçленĕ. Дояркăсене канашлăва чĕнчĕç. Канашлура вĕсене ĕнесене çĕрле кĕтесси çинчен сăмах пачĕç.

Дояркăсем Кострома облаçĕнчи «Караваево» совхоз ĕçлекенĕсен опычĕпе хытă интересленеççĕ, çав опытпа паллашаççĕ. Малта пыракансен опычĕ дояркăсене чĕрчи пысăк. Ĕне ĕметсем суратать.

А. КУЧКОВ.
Елчĕк районĕ, «Трактор» колхоз.

Çамрăк специалистсен çĕнĕ отрячĕ

Тутар республикин столицинче — Хусанта аслă шкулсем 10, техникумсем 19, çавăн пекех училищĕсемпе ФЗО шкулĕсем те нумай. Вĕсем кулленех тĕрлĕрен специалистсем пиншерĕн вĕрентсе кăлараççĕ. Кăçал Хусанти аслă шкулсенчен промышленность, ялхуçалăхĕ, халăха вĕрентес, халăх сывлăхне сыхлас ĕçсем валли виçĕ пин ытла специалист вĕренсе тухнă.

Сĕршыври чи ватă аслă шкулсенчен пĕри—Хусанти В. И. Ульянов-Ленин ячĕпе тăракан государство университечĕ килес çул хăй 150 çул тултарнине паллă тума хатĕрленет. Сахал мар çамрăксемпе хĕрсем çак университетра вĕренме ĕмĕтленеççĕ. Студентсемпе аспирантсем валли кунта питех те пуян библиотека пур, лайăх йĕркеленĕ лабораторисемпе кабинетсем çителĕклĕ. Университет çумĕнче зоологи, этнографи, геологи музейĕсем пур.

Университетра вĕренекен студентсен йышĕ çултан-çул ÿссе пырать. Кăçал кунта çамрăк специалистсем—математиксем, физиксем, химиксем, историксем, филологсем, географсем, юристсем, биологсем—800 çын ытла вĕренсе тухнă.

Хусанти ветеринари институчĕ Совет Союзĕнче паллă институт шутланса тăрать. Совет влаçĕ пулнăранпа çак институт научнăй работниксем 370 çын ытла вĕрентсе кăларнă. Вĕсем хушшинче академик Тушнов, Сталинла премин лауреачĕсем профессор Оликов, Климов, Акаевский, ветеринари врачĕ Социализмла Ĕç Геройĕ Медведев тата ыттисем те.

Çак институт тĕпчев ĕçĕсене анлăн туса пырать. Кунти ăслăлăх работникĕсем выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешес тĕлĕшпе, çаранесене тата вылăхсем кĕтсе çÿремелли вырăнсене лайăхлатас тĕлĕшпе туса хатĕрленĕ çĕнĕ меслетсем анлăн ĕçе кĕрсе пыраççĕ.

Ветеринари институтăн ăслăлăх ĕçĕсене студентсем активлă хутшăнаççĕ. Институтри научнăй кружоксенче кăçал 350 ытла студент ĕçленĕ. Кăçал институт 124 ветеринари врачĕ вĕрентсе кăларать. Вĕсем сывăх вăхăтрах ĕçлеме тухса каяççĕ.

Хусанти нефть промышленноçĕнчи инженер-строительсен институчĕ кăçал çĕршыв валли 84 инженер-строитель вĕрентсе кăларать. Теориллĕ вĕренĕве ăнăçлăн иртерсе, пулас инженерсем халĕ дипломлă проектировани енĕпе ĕçлеççĕ. Вĕсем хатĕрлекен проектсен темисем пирĕн çĕршыври мирлĕ строительствăна, совет халăхĕн материаллă тата культурăллă пурнăçĕ пĕрмаях ÿссе, лайăхланса пынине кăтартса параççĕ.

Çамрăк инженер-строительсем çак кунсенчех хăйсен ĕç вырăнĕсене—Тутар тата Пушкăрт республикисенчи нефть промышленноçĕн предприятийĕсене, Узбекистана, Туркменистана, Куйбышева, Челябинска, Омска, Абакана тата ытти хуласене те тухса каяççĕ.

Хусанти медицина институтĕнче те экзаменсем иртерне. Экзаменсен итогĕсем студентсен пĕлĕвĕсем çителĕклĕ пулнине кăтартса параççĕ. Педиатри факультечĕн виçĕ группинчи студентсем марксизм-ленинизм никĕсĕсем тăрăх экзаменсене «хорошо» тата «отлично» паллăсемпе панă. Санитарипе гигиена факультетĕнче те экзаменсем ăнăçлă иртнĕ.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнчен пуçласа Хусанти медицина институтĕнче студентсене пĕтĕмпе ултă çул вĕрентмелле тунă. Юлашки, улттăмĕш курсра студентсем, Хусанти клиникăсемпе больницăсенче субординаторсем пулса ĕçлесе, практикăллă хăнăхусем илчĕç. Часах вĕсем врач дипломне илеççĕ. Вĕсем хушшинче: эпидемиологсем, санитарнăй врачсем, терапевтсем, хирургсем, невропатологсем, рентгенологсем. Кăçал вĕренсе тухакан çамрăк врачсем ĕçлеме Амур, Киров, Челябинск, Горький облаçĕсене, Красноярск, Алтай крайĕсене, Мари тата Чăваш республикисене каяççĕ.

Июнĕн 20-мĕшĕнчен Хусанти пур аслă шкулсем те кăçал вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакан çамрăксенчен института вĕренме кĕресси синчен заявленисем илме пуçланă.

А. ФЕДОРОВ.

Лайăх ĕçлекен продавец

ИШЛЕЙ. И. Эриванов юлташ Ишек ялповĕнче 22 çул хушши продавец пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне юратса тăвать. Пайщиксем ăна хисеплеççĕ.

Эриванов юлташ магазина яланах тирпейлĕ тытать, ĕççыннисене ăпшăн кĕтсе илет, кирлĕ таварсем илме пулăшать. Мĕнле те пулин тавар магазинта пулмасан, ун çинчен пайщик правленине пĕлтерет, илсе килме сĕнет.

Пуçарулăх продавец тавар çаврăнăш планне уйăхран уйăха иртерсе тултарать.

Лайăх ĕçленĕшĕн Эриванов юлташа темиçе хутчен Хисеп грамоти тата преми панă.

Ф. ОЛАНГИН.

Выляв укçи илеççĕ

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăва ялĕнчи клуб çумĕнче заем облигацийĕсене тĕрĕслекен справка сĕтелĕ йĕркеленĕ. Кăçал нумай çынна заем облигацийĕсене тĕрĕслесе панă, выляв тухнине палăртнă.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли заемăн (1952 çулхи кăларăм) пĕрремĕш выляв тăрăх облигацисене тĕрĕслерĕç. Выляв таблици килнĕ кунах 5 çынна выляв тухнине палăртнă. Вĕсенчен хăшпĕрисем 500-шер, 200-шер тенкĕ выляса илнĕ.

В. НАУМОВ.

Тĕнчери лару-тăру

ВĂРÇĂРА ВИЛСЕ ПĔТМЕ ÇЫНСЕМ ЯНĂШАН ПАРАКАН «ПУЛĂШУ»

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви çитес бюджет çулĕнче США союзникĕсене çар енĕпе пулăшма укçа мĕн чухлĕ уйăрасси çинчен закон проекчĕ хатĕрленĕ. Çав проекта Америка конгресĕн иккĕ палатинче те сӳтсе явса йышăннă. Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, США-н «Маршалл планĕ» текенскерĕ ăнăçсăр пулнă пирки, ун вырăнне «пĕр-пĕрин хăрушсăрлăхне пĕрле хӳтĕлемелли программа» текенскерне тунă. США хăйĕн союзникĕсене çав план тăрăх ĕнтĕ «пулăшу» парать.

«Пулăшу» пама сенат 5.318 миллион доллар уйăрма, представительсен палати вара—4.998 миллион доллар уйăрма йышăннă. Иккĕ палати те Хĕвеланăç Европăри çĕршывсене, çав шута Франкистла Испани те кĕрет, иккĕ миллиард доллар ытла пама, Инçет Хĕвелтухăçĕнчи государствăсене пĕр миллиард доллара яхăн пама килĕшнĕ. Пысăк укçа—400 миллион доллар—Франципе Индо-Китайра колониллĕ вăрçă малалла тăсма пăраççĕ. Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсен территорийĕсенче сăтăрла, диверсиллĕ ĕçсем тума укçа парса тăма ятарласа çĕр миллион доллар уйăрнă.

Çапла вара, США-ри влаçра тăракан ушкăнсем малашне те хĕçпăшал нумай хатĕрлеме, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăр лару-тăрăва çăмăллатассине пур майсемпе те чăрмантарса пыма, хăйсен агрессиллĕ ĕмĕчĕсене пурнăçлама урăх çĕршывсене хутшăнтарма шутланине тепĕр хут кăтартса парĕç. Представительсен палатинче конгрессмен—республиканец Ворис «пĕр-пĕрин хăрушсăрлăхне пĕрле хӳтĕлемелли программăн» тĕллевĕ вăл США-н йӳнĕ хакпа вăрçăра вилсе пĕтмелли çынсем, «ют çĕршывсен кашни салтакне 10 доллартан каярах тӳлесе» туянмалли меслет пулать тесе ăнсăртран каламан ĕнтĕ.

Конгресс членĕсенчен ыттисем те нумайăшĕ çав «программăн» задачисем çинчен уççăнах каласа панă. Çапла вара вĕсем США-н тулашри политики чăннипе мĕнле пулнине тата та уççăнрах сутатнă. Вĕсем Совет Союзĕн чиккисем çывăхĕнче США-н стратегиллĕ базисем пулмалла тесе каланă, Азири çĕршывсене памалли укçан хисепне ӳстернине, ку вăл «лайăх политикăна палăртса тăни» пулать тесе, ырланă. Вĕсем тата хăйсен ытти шухăшĕсене те каласа панă.

США конгресĕнче «пулăшу» пама укçа уйăрасси çинчен сӳтсе явнă чухне Америкăри закон кăларакансен агрессиллĕ шухăшĕсемсĕр пуçне урăххи те—çĕршыври влаçра тăракан ушкăнсем хăйсен агрессиллĕ политикин çул-йĕрĕ путланса ларнă тата «Атлантика тăрăхĕнчи государствăсен» блокĕнче хирĕçӳсем питех те хытă вăйланнă пирки шикленесси ӳссе пыни те палăрнă.

Халиччен сенаторсемпе палата представителĕсен членĕсем укçа уйăрса парас тесе яланах çине тăнă пулсан, халĕ вара вĕсенчен хăшпĕрисем урăх çĕршывсене «пулăшма» укçа парассине хирĕç тухса каланă. США-па союзлă государствăсене «укçа нумайрах илесшĕн пулнăшăн», «вăйсăр пулнăшăн», «тӳрĕ кăмăллă пулманшăн», «парăнса тăманшăн» тата ыттисемшĕн те вăрçнă. Вĕсем США «чăннипе пĕччен тăрса юлнă» пирки ӳпкелешнĕ, «туссемпе союзниксем енчен» Пĕрлешӳллĕ Штатсене «пысăк хăрушлăх хăратса тăрать», тенĕ. Конгресри республиканецсен лидерĕ Тафт: эпĕ халиччен «пулăшу программине хирĕç кун пек питĕ хытă тăнине нихçан та курманччĕ», тенĕ.

Çавăн пек хирĕç тăнин сăлтавĕсем мĕнре-ха? Акă мĕнре: США хăйĕн союзникĕсене пăхăнтараймасть. Кун çинчен США-ри «Ньюсуик» журналăн издателĕ Малькольм Мюир каласа панă. Вăл Европăра нумай вăхăт хушши курса çӳренĕ. Унтан таврăнсан вăл: европеецсем халĕ США-на ертсе пыракансене ытлашши шансах каймаççĕ, «американецсене халĕ нихçанхинчен те сахалтарах хисеплеççĕ», тенĕ.

США тем тери хĕтĕртет пулин те, Хĕвеланăç Европăри государствăсен парламенчĕсем «Европа çарĕ» пирки тунă договорсене çирĕплетмен-ха. Чылай çĕршывсенче Америка «пулăшăвне» хирĕç, государствăн хăйне тĕллĕн тытса пымалли политикишĕн, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи ыйтусене мирлĕн йĕркелеме май паракан политика тытса пымалла тăвассишĕн калакан сасăсем хытăрах та хытăрах илтĕнеççĕ.

Америка «пулăшăвне» илме килĕшменни «Англие вăйсăрлатмасть, унăн вăйне ӳстерет» тесе çырнă нумай пулмасть Англири «Дейли экспресс» хаçат. Каирти «Аль-Ахрам» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америка Египета «пулăшу» пама çавăн пек условисем лартнă: Египетăн çар ĕçĕсене Америкăпа пĕрле туса пымалла. Çав условие Египет йышăнасшăн мар, «ку вăл Египет правительствин пĕтĕмĕшле политикипе килĕшсе тăмасть», тесе пĕлтернĕ хаçат.

Çавăн пек шухăш тытнин сăлтавне ăнланма йывăр мар. США «пулăшăвĕ» вăл ăна илекенсем пусмăра кĕрсе ӳкмеллине пĕлтерет. США-ран «ырă пулăшу» илекен государствăсен Америкăна хăйĕн капиталне çав çĕршывсене хывма ирĕк памалла, çав укçа тĕрĕс-тĕкел пулассине шантарса тăмалла, çакă вăл ку çĕршывсен экономикине Уолл-стритри хуçасене ытларах та ытларах пăхăнтарать. США-ран «пулăшу» илекен, Вашингтонпа союзла çыхăнса тăракан çĕршывсен ирĕксĕрех тулашри суту-илĕве, уйрăмах демократиллĕ рынокпа çыхăнса суту-илӳ тăвассине чакарма тивет. Çав «пулăшу» ăна илекен çĕршывсенче гражданла промышленноçа чакарасси патне илсе пырать, ку вара вĕсен халĕ те çирĕп мар экономикине тата ытларах аркатма пултарать. Тĕп сăлтав вара çакă: çав «пулăшăва» илекен çĕршывсене нумайлăха Америка империализмĕн урапи çумне çыхса лартаççĕ. Вĕсен вара ирĕксĕрех США империализмĕн тулашри политикине пурнăçлас ĕçри авантюрăсене хутшăнма тивет. Çав çĕршывсенче халăх массисен шухăшĕ урăхла, çавăнпа та асăннă политикăна тытса пыма халĕ йывăртарах та йывăртарах пулса пырать.

Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсенчи халăхсем США-н агрессиллĕ усал ĕмĕчĕсене хирĕç тăнине пĕтерме хăтланса, Америка конгресĕ халĕ хĕсме пăхать, вăл «пулăшу» илме килĕшекенсене малтан «Европа çарĕ» пирки тунă договора çирĕплеттересшĕн.

Çавăн пек хĕсни пулăшĕ-ши? Кунта Америкăри предприятисен 54 хуçин, кăçалхи март уйăхĕнче «пĕр-пĕрин хăрушсăрлăхне пĕрле хӳтĕлемелли программа» витĕмлĕ пулнине тĕпчĕсе вĕренме урăх çĕршывсене кайса çӳренĕскерсен, ăс-тăнлă выводне аса илтерни вырăнлă.

«Хăйне юратакан пĕр çĕршыв та пулăшу илнĕшĕн урăх çĕршыва пăхăнасшăн мар,—тесе çырнă вĕсем.—Ытти государствăсен экономикине ертсе пыма, вĕсен шалти ĕçĕсене хутшăнма хăтланассине пăрахма пирĕн вăхăт çитнĕ ĕнтĕ».

ФИЛИППИНРИ СУЙЛАВ УМĔН

Кăçал ноябрь уйăхĕнче Филиппинра президентпа вице-президента тата конгресс членĕсене суйлама черетлĕ суйлав ирттереççĕ. Çĕршывра суйлав умĕнхи кĕрешӳ анлă саралнă. Çак кĕрешӳ кунтан-кун вăйланса пырать. Буржуалла-помещикла тĕп партисем иккĕшĕ те—хальхи вăхăтра влаçра тăракан либералсен партийĕ тата хальхи вăхăтра оппозицире тăракан националистсен партийĕ—суйлав умĕнхи съездсене ирттернĕ, президент тата вице президент пулма суйлама хăйсен кандидачĕсене палăртнă. Либералсем президента суйлама Филиппин государствин хальхи президенчĕ—Эльпидио Киринона кандидата тăратнă. Националистсем президента суйлама ĕлĕк наци оборонин министрĕ пулнă Рамон Магсайсая кандидата тăратнă. Анчах либералсен партийĕ съезд вăхăтĕнче икке пайланнă. Ку партирен уйрăлнисем çĕнĕ парти тунă, ăна «демократиллĕ» парти тесе ят панă. Çак партя президента суйлама Карлос Ромуло дипломатăн кандидатурине тăратнă. Филиппинри коммунистсен партине тата ытти прогрессивлă ушкăнсене ĕçлеме чарнă, ун çинчен закон кăларнă, вĕсене хытă хĕсĕрлеççĕ, çавăнпа та вĕсем суйлава хутшăнмаççĕ.

Çапла вара, президента суйлама виçĕ кандидат тăратнă. Анчах буржуалла комментаторсенчен чи чеереххисем те çав кандидатсен программисем хушшинче мĕнле те пулин уйрăмлăх пуррине тупса палăртаймаççĕ. Вĕсене кандидата тăратнă партисен политикăлла çул-йĕрĕсем пĕр пекех. Вĕсем пурте çĕршыври влаçра тăракан классен — помещиксен, компрадорла (ют çĕршыв капиталне хăйсен çĕршывне илсе пыма пулăшакан) буржуазин тата колонизаторсен интересĕсене хӳтĕлеççĕ. Виçĕ кандидачĕ те ĕлĕк пĕр партирех тăнă. Магсайсайпа Ромуло нумай пулмасть, хăйсене президента суйлама кандидата тăраттарас шутпа, либералсен партийĕнчен тухнă. Вĕсене пурне те реакциллĕ идеологи, демократиллĕ государствăсен лагерьне кураймании, Уолл-стритпа çыхăнни пĕрлештерсе тăрать.

Çапах та вĕсем суйлав умĕнхи вăхăтра хытă тавлашаççĕ. Çав тавлашуран питĕ пысăк хирĕçӳ тухса кайнă. Кирино суйлавçăсене: манăн тăшмансенчен пĕрне президента суйласан, Филиппин халăхĕн питĕ нумай инкексем тӳсме тивет, тесе ĕнентерме хăтланать. Магсайсайпа Ромуло президента пултарусăр, укçалла сутăнакан çын, оппозицие хирĕç терропла ĕçсем тăвакан çын тесе тата ытти сăлтавсемпе айăплаççĕ. Магсайсай кандидатурине Америкăри буржуалла хаçатсем ырлаççĕ. Çак кандидат вара Филиппин халăхне çапла хăратать: президент пулма Киринона суйласан, Америка Филиппина çар енĕпе пулăшма пăрахĕ, тет. Вăл тата ытти сăмахсемпе Киринона хурлать.

Çавăнпа пĕр вăхăтрах партисем суйлав кунне активлă хатĕрленеççĕ, «практикăлла ĕçсене» тимлĕн туса пыраççĕ. Филиппинри «Манила Кроникл» хаçат нумай пулмасть çапла çырнă: чылай çĕрте халех ĕнтĕ ятарласа пĕр çĕртен тепĕр çĕре хăвăрт куçса çӳрекен отрядсем тунă. Ку отрядсен тĕллевĕ — суйлавçăсене хирĕç терропла ĕçсем тăвасси тата суйлав участокĕсенче ултавлă ĕçсем тăвасси.

Июнь уйăхĕн варринче Манилăра вырăнти политикăлла деятеле Монроя вĕлернĕ. Çак преступникла ĕçе Филиппинри хаçатсем партисен суйлав умĕнхи кĕрешĕвĕпе çыхăнтараççĕ. Ĕç акă мĕнре: хальхи правительствăн пĕр министрне взятка илнĕшĕн тата çынсенчен хăратса укçа илнĕшĕн айăплаççĕ, ăна айăпланă çĕрте Монрой тĕп свидетель пулнă.

Америкăри буржуалла хаçатсем Филиппинри суйлавçăсене «вăйлă президент», урăхла каласан, Америка политикине хирĕç тăракан халăха пăркăчласа тыткалама пултаракан çынна президента суйлама сĕнеççĕ. Филиппинри влаçра тăракан ушкăнсен халăха хирĕçле политики тата Америка колонизаторĕсем пуç пулса тăни çĕршыв экономикине питех те начарлатса çитернĕ, Филиппин халăхĕ калама çук йывăр çуклăха тăрса юлнă. Вăл выçă пирки ĕççĕр тăрса юлнипе, политикăлла правасăр пулнипе питĕ йывăр асап курать. Анчах Филиппинри патриотсем Америка колонизаторĕсен тата вĕсен çĕршыври тарçисен пусмăрне текех тӳссе пурăнасшăн мар.

СУТĂНЧĂКЛА ĔÇСЕМ ТĂВАС ÇУЛПА

Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен юхăмĕнче чăннипех те рабочи класс интересĕсемшĕн кĕрешекенсене рабочи класс интересĕсене сутакансенчен уйăракан паллă вăл профсоюзсен лидерĕсем пĕтĕм тĕнчери мире хӳтĕлессишĕн пыракан юхăм çине мĕнле пăхни пулать. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ халăхсем хушшинчи миршĕн яланах çине тăрса кĕрешет. Профсоюзсен реакциллĕ лидерĕсем, хĕвеланăçĕнчи капитализмла çĕршывсенчи профсоюзсен пысăк пĕрлешĕвĕсене ертсе пырас ĕçе хăйсен аллине тытса илнĕскерсем, пачах урăхла позици йышăннă.

Июлĕн 4-мĕшĕнче Стокгольмра «Тĕнчери ирĕклĕ профсоюзсен конфедерацийĕ» текенскерĕн виççĕмĕш съезчĕ уçăлнă. Çак пĕрлешĕве раскольникла тĕллевпе тунă. Вăл капитализмла çĕршывсенчи реакциллĕ профсоюзсен организацийĕсене чылайăшне пĕрлештерсе тăрать. Съезд кун йĕркинче «Пĕтĕм тĕнчере мир тăвас енĕпе ĕçлесси» текен ыйту та тăрать.

Кунта «ĕçлесси» текен сăмах мĕне пĕлтерни çинчен Америкăри ĕç федерацийĕн (АФТ) лидерĕ Мини тата США-ри производствăлла профсоюзсен конгресĕн (КПП) лидерĕ Рейтер съезда кайнă чухне çул çинчех каласа панă. Лондонра пресс-конференцире Мини çапла каланă: «Эпир мирлĕ лăпкăлăхра пурăнасшăн мар» (тĕнчери çĕршывсем хушшинчи ыйтусене калаçусем ирттернипе мирлĕн йĕркелесшĕн мар, тесе вуламалла.—А. А.), тенĕ. Çавăнтах пичет представителĕсемпе Рейтер та калаçнă. Аслă державăсем хушшинче калаçусем ирттермелли идейăна хӳтĕлеместĕп, тенĕ вăл. Çапла вара вăл халĕ ĕççыннисен анлă массисем хушшинче саралнă идейăна хирĕç тăрать. Америка делегацийĕ съездра та хăйĕн çав шухăшнех пурнăçласа пырать. Делегатсенчен пĕри тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха çăмăллатас шутпа аслă державăсем хушшинче калаçусем ирттерес шухăша пăртак ырлама хăтлансан, ăна хирĕç Мини сĕнĕрен тухса каланă, вăл империализмла государствăсен политикине тем тĕрлĕ хитре сăмахсем каласа мухтанă.

Съездăн малтанхи ларăвĕсенче хăшпĕр колонисенчи тата пăхăнса тăракан çĕршывсенчи профсоюзсен представителĕсем халăхсен наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăмне вăйлатма тата вĕсен прависене хӳтĕлеме пулăшма чĕннĕ. Вĕсем чĕнсе каланисене хирĕç профсоюзсен чиновникĕсем нумайăшĕ калаçнă. Профсоюзсен çав чиновникĕсем демократиллĕ лагерьпе тĕнчери прогрессивлă юхăм çинчен элеклеме съезд трибунине хăйсен аллине тытса илнĕ.

Çапла вара, «ирĕклĕ» профсоюзсен пуçлăхĕсем халĕ те рабочи класс интересĕсене сутас çулпа пыраççĕ. Анчах капитализмла çĕршывсенчи профсоюз членĕсен массисем хушшинче çав раскольникла «конфедерацин» влиянийĕ ытларах та ытларах чакать. Съезд пуçланас умĕн кăна Японири уйрăм хуçасен чугун çулĕсем çинче ĕçлекенсен профсоюзĕн федерацийĕ тата Пĕтĕм Японири государство чугун çулĕсем çинче ĕçлекенсен профсоюзĕ çав «конфедерацирен» тухма решени йышăннă.

А. АЛЕКСАНДРОВ.

Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕ çумĕнчи пичет ведомстви пĕлтерни

БЕРЛИН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви панă Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕ çумĕнчи Пичет ведомстви çакăн пек пĕлтерĕвне пичетлеме панă:

Америка ертсе пынипе Берлинра тунă провокаци путланса ларнă хыççăн, Америка правительстви Совет правительствине 1953 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнче нота парса Демократиллĕ Германи Республикин халăхĕ валли 15 миллион долларлăх апат-çимĕç тăратма килĕшни çинчен пĕлтернĕ. Демократиллĕ Германи Республикин халăх пурнăçне лайăхлатмалли тата пирĕн тăван çĕршыва мирлĕ пĕрлештермелли программине пурнăçлассинчен хăракан тата фашистла агентура пулăшнипе июнĕн 17-мĕшĕнче çав программăна пурнăçлассине чăрмантарма хăтланнă çынсем, хăйсен ĕçĕ ăнăçлă пулман пирки намăс курнăскерсем, халĕ каллех Америка «пулăшăвĕ» тенĕ ятпа хăйсен агентурине организацилеме тăрăшаççĕ. Демократиллĕ Германи Республикинче апат-çимĕç продукчĕсене валеçсе парас ыйтусене татса панă çĕре Америка, Англи тата Франци верховнăй комиссарĕсем хутшăнмалла тесе калани Америкăн ытти çĕршывсене парăнтарас политикине хавхалантаракансем мĕн тăвасшăн пулнине уççăн кăтартать.

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви темиçе çул каярах ĕнтĕ Германин шалти суту-илĕвĕ пирки, çулталăкне 2 миллиард маркăлăх таварсем сутса илес пирки килĕшӳ тума хатĕр пулни çинчен пĕлтернĕччĕ. Американецсен тата Аденауэр правительствин тивĕçлĕ органĕсем çав килĕшĕве тума пур майсемпе те чарса тăраççĕ. Çавна пула Германин хĕвелтухăçĕнчи пайĕнче те, хĕвеланăçĕнчи пайĕнче те экономикăна пысăк сиен кӳнĕ. Демократиллĕ Германи Республикипе çыхăнса суту-илӳ тунăшăн Хĕвеланăç Германири фирмăсене Бонри правительство хĕсĕрленĕ тата наказани панă. Американецсем Демократиллĕ Германи Республикин долларсен счечĕсене тытса илнĕ. Кун пирки темиçе хутчен те протестленĕ, çапах та ку счетсене паянхи кунччен те уçман.

Америка сĕнĕвне пропагандистла тĕллевпе тунă провокаци тесе кăна хаклама пулать. США правительстви чăннипех те нимĕç халăхне пулăшасшăн пулсан, унăн нимĕнрен малтан Германире шалти суту-илĕве тума чармалла мар, нимĕçсен шалти тата тулашри суту-илĕвĕн ирĕклĕхĕшĕн тăмалла, Шуман планне пăрахăçламалла. США правительстви Бонра тата Парижра тунă çар договорĕсене пĕтерсе тăкни, Германи ыйтăвне мирлĕн татса пама тăватă державăн конференцине пухассишĕн пулни çинчен пĕлтерни нимĕçсемшĕн лайăх пулăшу пулнă пулĕччĕ. Америка империалисчĕсем кĕтмен çĕртен Демократиллĕ Германи Республикинчи халăхшăн çапла тăрăшаççĕ пулсан, вĕсен Хĕвеланăç Германире ĕççĕр тăрса юлнă миллион çурă çынна ĕç тупса парассишĕн тата вĕсен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшмалла. Çакăн пек туни лайăхрах пулнă пулĕччĕ.

Демократиллĕ Германи Республикинчи халăх США правительствин сĕнĕвне хăйне кӳрентерни тесе шутлать тата «Америкăн çавăн пек пулăшăвне» илме килĕшмест. Çав «пулăшу», Америка пулăшăвне илнĕ тĕнчери ытти çĕршывсенчи пекех, нацин хăйĕн интересĕсене пĕтерсе хурассипе çыхăнса тăрать. Американецсемпе Аденауэр Демократиллĕ Германи Республикипе çыхăнса суту-илӳ тăвасси çине тăшманла пăхма пăрахсан тата Демократиллĕ Германи Республикин счечĕсене уçсан, пĕр-пĕринпе йĕркеллĕ, пĕр тан правалла пулмалли йĕркепе суту-илӳ килĕшĕвĕсем тума пулать. Кирек мĕнле пулсан та, Америкăн çăварта чăмласа çӳремелли резинкисене е ытти, нумайччен сутăнмасăр выртнă, таварĕсене туянма нимĕнле шухăш та çук. США-ри хаçатсем Демократиллĕ Германи Республикинче пурнăç лайăхланасси США таварсем тăратнинчен килет текен шухăша сарма хăтланни вара питех те тĕлĕнтерекен ĕç пулса тăрать. Çакă вăл йăнăш шухăш пулни уççăнах курăнать. Демократиллĕ Германи Республики тĕнчери демократиллĕ рынокпа çыхăннă çĕршывсен шутне кĕрет. Унăн правительстви Совет Союзĕпе, Китайпа, Польшăпа, Чехословакипе, Венгрипе, Болгарипе тата Румынипе пĕр-пĕриншĕн усăллă суту-илӳ договорĕсем турĕ, хальхи вăхăтра вăл Совет Союзĕнчен Демократиллĕ Германи Республикине çĕнĕрен таварсем илсе килес пирки хушса çырнă килĕшӳ тăвас пирки калаçусем ирттерет.

Миршĕн, Америка пуç пулса тăнине хирĕç

Лондонри ĕççыннисен демонстрацийĕпе митингĕ

ЛОНДОН, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Лондонра пысăк демонстраци пулнă. Ăна Великобританири Коммунистсен партийĕн Лондон округĕнчи комитечĕ организациленĕ. Сумăрлă çанталăк тăнă пулин те, Лондонра пурăнакан 8 пин çын демонстрацие тухнă. Демонстраци Великобританине Америка пуç пулса тăнинчен хăтарассишĕн, миршĕн, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа йĕркелессишĕн кĕрешме, ирĕклĕ суту-илӳшĕн, Совет Союзĕпе, Китайпа тата халăх демократи çĕршывĕсемпе туслă пурăнассишĕн кĕрешме чĕнекен лозунгсемпе иртнĕ.

Демонстрантсем хулан тĕп урамĕсемпе—Оксфорд-стрит, Регент-стрит урамĕсемпе, Пиккадили площачĕпе пырса Трафальгар площадне тухнă. Ку площадьре митинг пулнă. Демонстрантсем «Пилĕк аслă державăна ертсе пыракансем халех тĕл пулмалла», «Американецсен бомбардировщикĕсем Англирен тухса кайччăр», «Эпир миршĕн тăратпăр», «Тупăсем сахалтарах пулччăр, суртсем нумайрах пулччăр», «Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсемпе хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем пĕр-пĕринпе çыхăнса суту-илӳ туни доллар çитменни пĕтнине пĕлтерĕччĕ», «Корейăри вăрçа чарса лартăр! Пирĕн ывăлăмăрсене тăван çĕршыва тавăрăр!» тесе çырнă çĕршер лозунгсем çĕклесе пынă.

Демонстрантсем нумайăшĕ аслă Совет Союзĕпе мирлĕ, туслă, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнассишĕн пыракан кĕрешĕвĕн эмблемине çĕклесе пынă. Ку эмблема çакăн пек: пысăк кăшăл çине шурă пир çĕленĕ, ун çине Совет Союзĕпе Великобритани ялавĕсене хĕреслĕн ӳкернĕ. Вĕсенчен çӳлерехре—миршĕн кĕрешекенсен палли—шурă кăвакарчăн. Çав эмблема Англири халăх хушшинче анлă саралнă.

Митингра Великобританири Коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Гарри Поллит сăмах тухса каланă. Митинга пухăннисем ăна тăвăллăн алă çупса тата «урра» кăшкăрса кĕтсе илнĕ.

Демократиллĕ çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн секретариачĕ пĕлтерни

БУХАРЕСТ, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн секретариачĕ хаçатсем çинче пичетлеме пĕлтерӳ панă. Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен июлĕн 25-мĕшĕнче уçăлакан конгресĕ мире, нацисен хăрушсăрлăхне тата çамрăксен прависене хӳтĕлес ыйтусене анлăн сӳтсе явмалли трибуна пулса тăрĕ, тесе каланă пĕлтерӳре.

Пĕлтерӳре конгреса çĕр чăмăрĕн пур кĕтесĕсенчен те делегатсем пухăнма пуçланине палăртнă. Австрипе Бразилирен делегатсем Бухареста çитнĕ. Индонези, Финлянди, Алжир тата ытти çĕршывсен делегацийĕсем конгреса пыма çул çине тухнă.

Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конгресĕ майлă тăракансен пысăк юхăмĕ пĕтĕм тĕнчипех саралать.

Делегатсем Бухареста пĕр-пĕринпе калаçса татăлма, çамрăк ăру валли телейлĕ пурнăç тата мир тума пĕрле мерăсем йышăнма пухăнаççĕ, тенĕ пĕлтерӳре.

ÇĔНĔ ПРОВОКАЦИСЕМ ТУМА УКÇА ПАРТАРАСШĂН

ВАШИНГТОН, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин пĕлтерĕвĕнчен çакă курăнать: представительсен палатин членĕ республиканец Керстен (Висконсин штачĕ) закон проекчĕ тăратнă. Унта правительствăна ССР Союзĕнче тата халăх демократи çĕршывĕсенче сăтăрла ĕçсем тума 500 миллион доллар расходлама ирĕк парасси çинчен каланă.

Францин Наци пухăвĕнче

ПАРИЖ, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Наци пухăвĕн кĕске вăхăтлăх ларăвĕ пулнă. Унта Ланьель правительстви финанс енĕпе хатĕрленĕ закон проектне пăхса тухнă. Проекта çирĕплетессишĕн 313 сасă, ăна çирĕплетессине хирĕç 268 сасă пулнă. Çапла вара закон проектне çирĕплетнĕ.

Унччен республика совечĕ горючи хакне ӳстерессипе тата спиртпа эрех сутнăшăн налог тӳлемелле тăвасси çинчен калакан статьясене йышăнман пулнă. Наци пухăвĕнче вара çав статьясене те йышăннă. Ланьель хатĕрленĕ закон проекчĕ халĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех çирĕпленнĕ шутланать.

Турцире ачасене сутаççĕ

СОФИЯ, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари телеграф агентстви çакăн çинчен пĕлтерет:

Турцире тухакан «Демократ измир» хаçат çырнă тăрăх, Сивас ялĕнче (Балыкесир вилайечĕ) амăшĕпе ашшĕ хăйсен 13 çулхи хĕрне Турци укçипе 500 лирла сутнă.

Çамрăк художниксен картинисем

Шупашкарти художество училищин залĕнче çамрăк художниксем ӳкернĕ картинăсен выставки уçăлнă. Выставкăна, училищĕре вĕренекенсен картинисемпе пĕрлех, кăçал вĕренсе тухнисен дипломлă ĕçĕсене те тăратнă.

...Аслă та çутă пӳлĕм. Ятарласа тунă рамăсене картинăсем, эскизсем, тĕрлĕрен ӳкерчĕксем вырнаçтарнă. Куракан аякранах «Охотников чăваш В. И. Ленин патĕнче» эскиза асăрхать. Илемлĕ те чуна хумхантаракан эскиз. Гимназист формине тăхăннă В. И. Ульянов-Ленин хăй умĕнче ларакан Охотников çине ăшшăн, кăмăллăн пăхать. Унăн сăн-пичĕ, çивĕч куçĕсем революци çулпуçĕ çамрăк чухнех çав тери хăвăрт асăрхаса илекен, нумай пĕлекен çын пулни çинчен калаççĕ. Хăйне вĕренӳре пулăшакан çын тупнăшăн Охотников савăнать, вăл тулли кăмăлпа хăй мĕн вĕренни çинчен Ленина каласа парать. В. И. Ленин ларакан пукан хыçĕнче унăн амăшĕ тăрать. Хăйĕн ывăлĕ чăваш çыннине гимназие вĕренме кĕме хатĕрленĕшĕн вăл чунтан савăнать, ывăлĕн ĕçне хаклать.

Эскиз авторĕ Н. Лизуков çак картинăна ӳкерме хатĕрленсе Ульяновск хулине Ленин пурăннă çурта кайса курнă, çулпуç пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен кĕнекесем нумай вуланă.

А. Скворцов хăйĕн эскизĕнче вырăссен революциллĕ демократчĕ Н. Г. Чернышевский Петропавловск крепоçĕнче хăйĕн «Мĕн тумалла?» ятлă романне çырнине кăтартать. Эскиза пысăк пултарулăхпа, аван ӳкернĕ. Куракан умĕнче пĕчĕк пӳлĕм. Тимĕр решеткăпа картланă хĕсĕк кантăкран пӳлĕме çутă сахал кĕрет. Кровать çинче XIX-мĕш ĕмĕрти революциллĕ демократ, патша тĕрмисемпе каземачĕсенче 27 çул ларса ирттернĕ Н. Г. Чернышевский хăйĕн вилĕмсĕр произведенине пысăк тимлĕхпе çырать. Революциллĕ демократăн мăнаçлă кĕлетки тата икĕлми вăй-хăвачĕ эскизра уççăн курăнса тăраççĕ. Художник ăна лайăх ӳкернĕ, сăрăсемпе пĕлсе усă курнă. Ахальтен мар ĕнтĕ училищĕри комисси членĕсем пĕр кăмăллă пулса çак эскиза «5» паллăпа хакланă.

Юнашар рама çинче И. Скворцов ӳкернĕ эскиз, вăл «Çыру» ятлă. Улăх-çаран ути пухнă вăхăтра письмоносец ĕçлекенсем патне хаçат-журналсем, çырусем илсе пынă. Акă, малта кĕрепле тытнă икĕ хĕрача çыру вулаççĕ. Нимĕнех те çук темелле. Анчах, тимлĕрех пăхсан, картина çав тери интереслентерет. Кунта колхоз ĕçченĕсен шухăш-кăмăлĕ, вĕсен маттурлăхĕ уççăнах сисĕнет. Картинăра колхозлă ял çыннисен пурнăçне тĕрĕс сутатса кăтартнă.

Шкул пурнăçĕ çинчен çырнă картинăсен пайĕ те пĕчĕк мар. Вĕсенчен уйрăмах «Урокран юлнă» эскиз илĕртет. Унăн авторĕ Б. Камаев. Пултарулă çамрăк художник кăçал Ленинградри Репин ячĕпе тăракан художество Академине вĕренме каять.

Çавăн пекех А. Елсукова, А. Чеглаков, А. Харитонычев, Я. Семенов ӳкернĕ эскизсем те куракансен кăмăлне каяççĕ.

Çамрăк художниксен картинисем училищĕре ĕçлекенсем хăйсен воспитанникĕсене çирĕп пĕлӳ парассишĕн тăрăшса ĕçленине лайăх кăтартаççĕ.

В. ШАЛТАЙКИН.

Кашни рабочи хаçат илет

Улатăр станцийĕн йывăç касакалакан мастерскойĕнчи пуçламăш парторганизаци рабочисемпе служащисем пурте хаçат-журнал çырăнса илччĕр тесе тăрăшать.

1953 çулти иккĕмĕш çур çулта вырăнта тата центрта тухакан хаçатсем 75 экземпляр тата 5 экземпляр журнал килсе тăрать. Халĕ мастерскойри кашни рабочипе служащи хаçат çырăнса илсе вулать.

Н. КОЛЕСОВ.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Коллективлă ертсе пымалли принципа çирĕппĕн пурнăçламалла («Правда» хаçатăн кăçалхи июлĕн 13-мĕшĕнчи умстатьи).

Шупашкар хулинчи тата республикăри коммунистсем КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕн постановленине пĕр шухăш-кăмăлпа ырлаççĕ (КПСС Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн Шупашкар хулинчи тата республикăри парти активĕпе пĕрле ирттернĕ пĕрлешӳллĕ пленумĕ).

Чăваш АССР-ĕнчи финанс органĕсем 1953 çулхи иккĕмĕш кварталта финанс планне тултарассишĕн социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен.

1953 çулхи иккĕмĕш кварталта ялти халăха кино кăтартас енĕпе социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен.

Н. Егоров.—Комсомол организацийĕсем тата ялти культурăпа çутĕç учрежденийĕсем.

СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен Министерствинче.

Малта пыракансен опытне лайăх тата тĕплĕн сутатмалла (Вăрнар районĕнчи «Социализм çулĕпе» хаçат çинчен).

Итемсем çинче тырра виçсе пăхас тата тиес ĕçе механизацилесси.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—Кизел хулинчи драма театрĕн гастролĕсем. Июлĕн 14-мĕшĕнче «Поэма о любви».

Спектакль 20 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«РОДИНА»—июлĕн 14-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Смелые люди», ытти сеанссенче—«Дочь полка». Сеанссем 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ июлĕн 11-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕн соединенийĕсем Йоньчхоньрен хĕвеланăçнерехре тата Мункон районĕнче хăшпĕр вырăнсенче тăшмана хирĕç çапăçнă. Самолетсене хирĕç çапăçакан салтаксем паян тăшманăн пĕр самолетне персе ӳкернĕ, 3 самолетне сиен кӳнĕ.

ПХЕНЬЯН, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ июлĕн 12-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕсем Чанпхенли районĕнче хăшпĕр вырăнсенче çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй часĕсемпе самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ, пĕр самолетне сиен кӳнĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01450 Типография № 1 Министерства Культуры Чувашской АССР г. Чебоксары, Володарского, 5. Тираж 20.000 экз.